К84.89(=Чув)
Ю41
Ч-37698

Геннадий Юмарт

# АВАЛХИ ХАВАЛ

Геннадий Юмарт

# АВАЛХИ ХАВАЛ

СĂВĂСЕМПЕ
ПОЭМĂСЕМ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2001

УДК 821.512.111 — 93
ББК 84 (2Рос — Чув)
Ю 41

**Юмарт (Трофимов) Г.Ф.**
Ю 41 Авалхи хавал: Сăвăсемпе поэмăсем. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2001. — 96 с.

Кĕнекере тăван халăх кун-çулĕнчи паллă ĕçсемпе мухтавлă мăн асаттесем тата вĕсен ырă йăлисем çинчен каласа панă.

Ч-37698

**УДК 821.512.111 — 93**
**ББК 84 (2 Рос — Чув)**

© Чăваш кĕнеке издательстви, 2001
ISBN 5-7670-1192-3 © Юмарт (Трофимов) Г.Ф., 2001

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
Ч.Р. КОЙ

# СӐВӐСЕМ



## *«МӐН АСАТТЕСЕМ» ЯРӐМРАН*

### ТУХЬЯ

Тухья — чӑваш элемӗ,
Чӑвашлӑхӑн палли,
Тухья — чӑваш илемӗ,
Тухья — хӗрсем валли.

Юрлаççӗ мухтамашкӑн
Сар йӗкӗт ячӗпе:
«Савмашкӑн-вылямашкӑн
Тухьяллӑ хӗр чипер...»

Хӗрсем татах та капӑр
Пуçри тухйипеле.
Хӑна кӗтме тухатпӑр
Тухья çутипеле...

Чăвашăн пихампарĕ —
Тухьямăрăн çути —
Пире упранă мар-и
Паян куна çити?

Тухать ума асамлă
Алтайăн ту хырçи.
Унта-çке тăхăмланнă
Тĕп несĕлсен чĕрçи.

Тухья пек пулнă теççĕ
Унти пĕр вырăна.
Тен, кăшт хитрелетеççĕ
Халапсенче ăна?

Анчах йăх пуçĕ — кашкăр
Тăвать унта йăва:
Камах çитсе-ха каçтăр
Çак вăрттăн çĕршыва?

Пĕр ачана хăтарнă
Çак ырă чун — ама.
Леш вун ача хăварнă
Тĕреклĕн хунама.

*Тĕрек* тесех каланă
Çав кашкăр тăхăмне.
*Тухья* тесе ят панă
Малтан хăйсен йăхне...

*Йăва* пек *туллă* вырăн
Кун панă-çке йăха.

Ятра туятăн ыррăн
Çак икĕ сăмаха.

Ту ĕлкине куратăн
Тухья кӳлепинче,
Тĕсне те тавçăратăн
Ун симĕс шăрçинче...

Хĕвел, тӳпе сăнарĕ —
Тухья эрешĕнче.
Çапла ĕненнĕ мар-и:
Упрать çӳлти тĕнче.

Хальччен чыслать-шим халăх
Кун курнă çĕршывне?
Нухрат-мерчен тухьяллă
Тухать тĕнче умне.

## УЛĂПСЕМ

Пуряннă вĕсем сĕм авалах,
Хапăллана ырă хавала.
Пулнă тет хăйсем шултра,
Атлантсем пек вăйлă та патвар.
Çичĕ çухрăм пулнă тет утти,
Çичĕ чалăш тăршшĕ — çăпати.
Хăтлăх кӳнĕ хăтсăр тĕнчене,
Тытнă теççĕ пурнăç тыткине.
Пĕлĕте çĕкленĕ тет çӳле
Ирĕккĕн хăйсем çӳремелле;

Ăшăнмашкăн тупнă кăварне,
Шăрăх чух çутарнă çумăрне.
Вырăнтан куçарнă тет тăва,
Çĕн çулпа юхтарнă тет шыва.
Тĕнчене шыв илнĕ те — талай
Шавласа тăрайнă тет чылай.
Пур чĕр чун пĕтес патне çитсен
Улăп çăлнă тет путассинчен:
Хывнă та вăл хăйĕн кĕпине
Мăшăррăн тултарнă ун ăшне.
Тытнă тет пĕр вăхăт пĕлĕтре,
Шыв чаксан антарнă тет çĕре.
Пулнă тет кĕпи асамлăскер,
Çитмĕл çич тĕспе тĕрленĕскер.
Иксĕлми вăй панă — хĕн килсен,
Çĕнеймен никам та — кĕрешсен.
Хăваланă вăл тăшмансене —
Татăлма паман тăван йăхне.
Йыхăрсан та ют çĕре Мерчен
Вăл кайман çуралнă çĕрĕнчен.
Савнă çĕрĕ пулнă хаклăрах,
Чăн телейĕ — хамăр халăхра.
Улăп ватăлса шуралнă та
Вырăн тупнă чаплă масарта:
Пĕчĕкçĕ ту евĕрлĕ тĕми
Нихăçан йăшса çĕтми-пĕтми.
Çав тĕме çине ларса кансан
Иксĕлми вăй-хал кĕрет-мĕн сан.
Йывăрлăх килсен çĕршывăма
Улăп хатĕр чĕрĕлсе тăма.

Çил çунатлă шурă утпала
Çĕкленсе вара вăл тухмалла.
Улăпăн тăпри асамлă тет:
Хытнă анана иккен имлет.
Мул тăпри тесе вара ăна
Ывçăн-ывçăн сапнă пахчана...

Улăп йăхĕнчен эпир, туссем!
Улăпла — эпир тăвас ĕçсем.
Халăх вăй илет улăпсемпе,
Пурăнар вĕсен хавалĕпе!
Тулăхрах сапса мул тăприне
Имçамлар-и пурнăç йывăçне!

## МЕРЧЕН* ХУЛИ

Сарлака та çӳллĕ ту çинче
Мерченех те хули курăнать.
Икĕ хутлă хулăн хӳмере
Мерчен пек илемлĕ çĕкленет.

Улăхайрăм Мерчен хулине,
Мерченех хули мерченсĕр мар.
Тĕлех пултăм мерчен улшуçне,
Хушрĕ мана мерчен суйлама.

---

Ку хула ятне *Меречен* тесе те калаççĕ.

Тăван пек хулам тăвансăр мар —
Мерчен тĕсĕ çапнă çамкине.
Хупласа та килчĕç хурахсем —
Тăванран та тиврĕ уйрăлма.

Мерчентен хула çавăрни çук,
Тăвантан тăван тăранни çук.
Тăванăма кайрăм шыраса,
Тупăнчĕ вăл çĕнĕ Мерченте.

## КĂТРАХА

Кăтраха çăлĕ патĕнче икĕ пысăк хурăн ларaççĕ: вĕсене «Учук хурăнĕ» теççĕ. Вĕсен пĕр çулçине татсан та çынна инкек пулать теççĕ ваттисем.

*Н.И.Ашмарин*. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки, VII т., 203 с.

Эс кам таврашĕ, Кăтраха?
Кавказ енчен ку тăрăха
Эшкерӳпе куçса килсе
Эс канăç тупнă-ши вилсе?
Хай Аспарух Дунай çине
Кайса тĕпленнĕ ун чухне.
Шырарăн пулĕ ырлăха,
Нумай-тăр лекрĕн шырлăха.
Çапах упраннă сан йăху,
Йăхупала — мăнаçлăху:

Сăваплă çак киремете
Çын тивмĕ те, пĕтермĕ те.
Пĕтересех тесен сана —
Тытса хутлатăн эс ăна.
Пĕртен-пĕр шалкăмлă çулçу
Типсессĕн те — çухалас çук:
Ӳссе хăпарĕ хунаву,
Юхма пăрахмĕ сан шыву.
Ытах кусем те манăçсан —
Ытти çĕрте хăват пур сан.
Самар кукри тавраш ĕнчех —
Малтан вырнаçнă çĕрсенчех
Çынна пуçтарнă Чул кĕлет,
Вăл хытăрах тытма пĕлет.
Çак хурăнташ чул кĕлетке
Тахçантанпах тытать йĕрке:
Ун яланхи ыр тусĕсем —
Тавралăхри чӳк пуçĕсем.
Унта тĕпленнĕ йăх — аскул,
Унпа, тăван, тăванлă пул:
Пăлхар çĕрне вăрă-хурах
Килсе тустарнă вăхăтра
Вăл алă панă тăванла.
Ăна ан манăр айванла.
Хам пиллеме пĕлеймесен —
Ман пилĕме унран илен...
Çак сĕмленӳ кайрантарах
Тӳрре тухайрĕ-ши вара?
Якку Иванĕ сив чирпе
Вилмех çитсессĕн пĕр ирпе

Аскулăн çĕрĕ хăтарать,
Мухтавлă ĕç тупса парать:
«Ма çук чăвашăн кĕнеки?
Çырсамччĕ эсĕ ун пекки!..»
Çак сĕмленӳллĕ сăмахра
Хай Кăтраха кĕтни пурах.

## ĔШЕЛ ХУЛИ

Çичçĕр çитмĕл çул та пилĕк çул
Ĕшел хули мар, ишлĕк çеç кунта.
Çичçĕр çитмĕл çул та пилĕк çул
Пурăнмасть этем çунăк вырăнта.
Çичçĕр çитмĕл çул та пилĕк çул
Çиеле тухать кĕл те кăмрăк, чул.
Çичçĕр çитмĕл çул та пилĕк çул
Ыррăн çитĕнмест нимĕнле тыр-пул.
Çичçĕр çитмĕл çул та пилĕк çул
Курăнать куçа ахăр самана.
Çичçĕр çитмĕл çул та пилĕк çул
Хура кун тăрать тулхăрса чуна:
Тахçантан вара ĕнтĕ сĕкĕнеç
Кай енчен килсе пăлхарсем çине.
Анчĕ карапппа пилĕк вырăс кнеç,
Тухрĕ йăтăнса çӳл çыран хĕрне.
Инçе мар кунтан Ĕшеле çитме,
Инçе мар унтан таврăнас тесен.
Ĕшел тавралла çӳллĕех чикме,
Шал енче хӳме икĕ хут иккен.

Ёнтĕ мĕн тери юхрĕ хĕрлĕ юн —
Хăрамасть Ёшел, парăнмасть пăлхар.
Ёнтĕ ик енчен пĕтрĕ миçе чун?
Йывăр Ёшеле — халăх йышлă мар.
Пуртăсем тытса чикмене хирме
Пычĕç вырăссем ак хула патне.
Чĕртнĕ вут йăтса хӳмене чĕртме
Çитрĕç те вĕсем тĕртрĕçĕ вутне.
Малтисем вутпа уçнă çулпала
Утпала килет хумлă-хумлă рет —
Керменпе хула йĕри-тавралла
Ухă-сăнăпа йышлă çар кĕрет.
Хӳмерен иртсен çӳллĕ ур та пур —
Ишрĕç тĕппипе темиçе тĕлтен.
Çапăçсассăн та темĕн пек сатур
Шав тивет чакма йăшнă ёшелсен.
Ертӳçи вĕсен пĕчĕкçĕ йышпах
Ёлкĕрчĕ тарма вут-хĕм витĕрех.
Парăнасшăн мар ыттисем çапах:
«Măшкăл куриччен — чунăм пĕттĕрех!»
Арăм, ачапча лекрĕ тыткăна,
Миçе чун тата çунчĕ çулăмра?!
Тăвăл евĕр вут хыпрĕ хулана —
Юлчĕ кăмрăк çеç сарлака уйра.
Пилĕк вырăс кнеç янă хурахсем
Тухрĕç Ёшеле тустарса-тусса.
Илчĕç тыткăна сахал мар вĕсем,
Ёлкĕрчĕç тухма пысăк мул пухса.
Ыткăнчĕç вара карапсем çине,
Кайрĕç хускалса тăвалла часрах.

Пăлхар ен хăпса тепĕр çыранне
Çитрĕ тăчĕ ак самантрах.
Çук пӳлсе хума ĕнтĕ вырăса —
Атăл варрине ухă çитес çук.
Юлчĕç пăлхарсем хыттăн макăрса,
Вырăс çарĕсем ишрĕç питĕ шух.
Мĕкĕрет кĕпçи, çухăрать сăрнай,
Ĕсĕклет-йĕрет тыткăнри этем...
Карапсем çинче пурлăх-мул нумай
Савăнĕç пайтах вырăс кнеçĕсем.
Святославĕ ав каçăртнă пуçне:
«Атăлăн çулне илĕп хам алла,
Аçтăрхан патне çӳрĕп ун чухне...»
Сĕмсĕр Святослав, питĕ ан мухтан
Таврăнăп тесе ылтăн-кĕмĕлпе:
Карапу тулли ылтăн мар — ылхан,
Тулнă вăл йăлтах çын куççулĕпе.
Пĕтĕм таврана çилпеле вĕçсе
Кĕлĕ çак хулан кайĕ тетĕн-им?
Сан ятна-сумна ĕмĕр питлесе
Курăнĕ куçа Ĕшел тĕтĕмĕ.

## ПĂЛХАР ПАТШИ

Пычĕ тет пĕри пăхма
Авалхи хула тĕлне.
Пуç шăмми тухать ума
Сирнĕ майăн ун кĕлне.

Ылтăн-кĕмĕл япала
Тупманран кӳреннипе
Тапрĕ ячĕ малалла
Хай шăмма вăл урипе.

Кăлай пек леш хайхискер
Кусрĕ кайрĕ тет чылай.
Сас парать тет чип-чипер
Чарăнса ĕлкĕрнĕ май:

— Тимлĕрех пăхса утсам,
Ыраттартăн ĕнсене.
Çын шăмми-çке эп, ачам,
Тен, тăсатăн несĕлне?

Тав Турра та Пӳлĕхçе:
Пиллĕх панăччĕ авал.
Патшара хам тивĕçе
Пытăм эп тытса кал-кал.

Çĕрĕм-шывăм тем тери
Сарăлса выртатчĕ ман.
Ют патша та хăш-пĕри
Пуç таймасăр пурăнман.

Паттăрччĕ ман çарăмсем,
Чыс кӳретчĕç патшана:
Арăслан пекех вĕсем
Çĕнтеретчĕç тăшмана.

Эпĕ хушнă сăмаха
Хирĕçсе-туса тăман.
Пĕр каварлă çич йăха
Çĕнеймен хурах тăшман.

Сутуçăсем çурçĕртен,
Кăнтăртан та анăçран —
Пухăнатчĕç ют çĕртен,
Таталман пуç хуларан.

Мĕн тавар та кам таврашĕ
Çукчĕ пулĕ пасарта!
Тӳрĕ кăмăллă, йăваш
Калаçатчĕç Пăлхарта.

Пирĕн пуç хуламăра
Пурте хисеплетчĕçĕ,
Ахаль мар-тăр таврара
Аслă хула тетчĕçĕ.

Чапăм ӳснĕ майĕпе
Хам пуçларăм иртĕхме.
Ĕмĕт тытрăм кӳршĕпе
Çапăçса çĕрне илме.

Шухăшламан тапхăрта
Çитрĕ вилĕм-ватлăхăм.
Ӳтĕм çĕрчĕ хăвăртах,
Пĕтрĕ ман сăваплăхăм.

Ӳтӗм ҫеҫ мар, нимӗн те
Юлаймарӗ мулӑмран.
Пуҫ хулам ларас тӗлте
Чул та шӑмӑ ҫеҫ куран.

Халь мӗнпур иртен-ҫӳрен
Урипе тапать мана.
Авалхи еткерӗмрен
Юлнӑ-мӗн халап кӑна.

Эс, тӑванӑм, сывӑ чух
Ан мухтан тивлетӳпе.
Тыт хӑвна сӑпайлӑ, чух,
Ырлӑх кӳрӗ ҫӳл тӳпе.

## ПӐЛАХУ

Пурӑнать чӑваш пин ҫул
Мӑн Ҫавал тӑрӑхӗнче.
Кӑмрӑк, шӑмӑ, кӗл те чул
Тухӗ тӗрлӗ сӑрт ҫинче.

Чӑн хыпар калать пире
Темӗн чухлӗ ҫын шӑмми.
Кур чӳлмек ҫинчи тӗрре —
Вӑл пӗлтерӗ йӑнӑшми.

Çын вилсен те пичĕпе
Выртнă-мĕн хĕвел енне.
Пӳрт лаша янахĕпе
Çирĕп тытнă никĕсне...

Хамăр тенĕ япала
Пуринчен те пахарах.
Кăлармастпăр çĕн йăла,
Пурăнатпăр унсăрах...

Çак сăмах çав тапхăрта
Çирĕпленнĕ ахăртне
Мăсăльманлăх Пăлхарта
Çĕклесессĕн хĕç-хăртне.

Сĕм вăрманлă Вирьяла
Тарнă-мĕн хăш-пĕр пăлхар.
Шухăшланă-тăр аллах
Çитес çук тесе вăр-вар.

Çитнĕ-шим çапах кайран
Хай патша нукерĕсем,
Тухăçран е анăçран
Килнĕ-шим вăр-хурахсем —

Çĕтнĕ, пĕтнĕ Пăлаху,
Ним çурт-йĕрĕ те юлман.
Çавăнпа та вăл салху,
Кашламасть кунта юман.

Хӑй пӗтсен те — хурӑнташ
Ларнӑ тухнӑ ҫывӑха:
Пусӗпех ҫӗтмен чӑваш,
Ҫухалман яланлӑха.

Ун ятне-чысне ҫӗклет
Тӗрлӗрен Упи, Супар —
Пурӑнать, ӗрчет, ӗҫлет
Авалхи пӑлхар-сӑвар.

## УРАСМЕТ

Пулнӑ урмӑш Урасмет —
Чӑвашсемшӗн чӗр сехмет.
Ҫамрӑк чухне Хусана
Кайнӑ тет тытса ӑна,
Кӗртнӗ тет тутар тӗнне,
Лекнӗ тет вӑл хан ҫарне.
Вӑрҫӑра ҫӳре-ҫӳре
Тухнӑ тет хӑй тискере:
Ҫаратса та вӗлерсе
Чунӗ кайнӑ тилӗрсе.
Хырҫӑ-марҫӑ хан валли,
Сарӑ хӗр те ун валли
Пухнӑ-хырнӑ халӑхран,
Иртӗхнӗ вӑл ырлӑхран.
Пӗртӑван Ураспука
Ӳкӗтленӗ пӗр авка:
— Ытлашши хаяр ан пул.

№ К-2909
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
Ч-3

Юхрĕ пуль мĕн чул куççуль
Чăваша тустарнă май,
Тутара кăларнă май.
Кĕтĕн пысăк çылăха,
Тухрăн чăн-чăн пуçтаха.
Чиксĕр сан çăткăнлăху,
Сумсăр юлĕ сан йăху.
Хӳтлĕхне кӳреймĕ хан,
Витĕ сан ятна ылхан.
Вилмĕн ырă вилĕмпе,
Пĕтĕн халăх çиллипе... —
Çак ăш пиллĕ шухăша
Урасмет илмен ăша.
Кил-çуртне те унăнне,
Ĕмĕр пухнă ылтăнне
Хусахсем тустарнă тет,
Часрах тухса тарнă тет.
Хăвалать ку хыçĕнчен
Хăй вилĕмне тупиччен...
Чыссăр пĕтнĕ Урасмет,
Чунне сутнă эсремет.
Халăхра ылханлă ят
Халичченех пурăнать.

## СĂВАШ

Чăвашсене хурах тустарнă,
Çаратнă пурлăхне, çунтарнă
Ялсем тĕпленнĕ вырăна
Хăварнă кĕл купи кăна.

Пуç хунă çапăçса яш-кĕрĕм,
Хирет тăшман татах тискеррĕн.
Ан тив, вăрçма та хал юлман —
Пуçне чăваш питех усман.
Мел тупнă тет вара йăх пуçĕ,
Ăс-хал çӳпçи — Сăваш пĕлӳçĕ.
Вăл пурăннă шыв хĕрринче
Урпа акса хăртнăсенче.
Шур çӳçлĕ тет, чике сухаллă,
Вăл ылтăн шăллă тет, вăй-халлă.
Пытаннă халăха пухса
Кӳлле чӳк тунă пуççапса:
— Эй, кӳлĕ! Хăватна парсамччĕ,
Хурахсенчен эс хăтарсамччĕ!
Пĕтетпĕр ним айăпсăрах.
Чуна упра! Эй, ан пăрах!.. —
Кĕрле пуçланă тĕпсĕр кӳлĕ,
Çĕкленнĕ çаврaçил те çӳллĕ —
Шыва хăпартнă тӳпене,
Хупланă тăвăл тĕнчене.
Аçа шартлатнă, çумăр янă,
Нихçанхинчен хаяр шавланă.
Вăл хăваланă тăшмана,
Шыва ярас тесе ăна.
Хурах терт курнă: путнă-тарнă —
Çаратнă пурлăхне хăварнă.

## САРРИ ПАТТĂР

Ан иксĕлтĕр пирĕн аваллăх юрри!
Мухтав сăмахне тивĕç паттăр Сарри.

Ăсанчĕ тăвата çĕр çул Ахрата,
Манмарĕ чăваш çак сăваплă ята.

Манмарĕ чăваш çакă паттăр ĕçне:
Сарри хӳтĕленĕ чăвашăн чысне!

Ĕнер çеç пулса-шавласа иртнĕнех
Халап ун çинчен пĕлтерет тĕплĕнех.

Кĕрмешрĕç Хусан ханĕсем чăваша
Ялан кăларма мĕскĕне-йăваша.

Тустар кил-çуртне те çарат пурлăхне
Вăрла, илсе кай ытарми хĕрсене —

Эс пурпĕр ан чĕн те е хирĕç ан тăр,
Хусан умĕнче хăв пуçна усăнтар.

Çапах хусансем шикленеççĕ кăштах,
Чее хăтланма та ӳркенмĕ пуçтах.

Чăваш ырçинчен сăптăран хырçăран
Туй-çуй ирттереççĕ вĕсем хушăран.

Чĕнеççĕ унта ырă ятлă пулса
Айван чăваша шăл йĕрсе те кулса.

Унтан пăрăнма хăтлансан аякка
Касать çурăмна чăвăшти нухайкка.

Вара ӳсӗрлен та каян ҫемҫелсе,
Пуҫлан пуплеме тӑшманпа ейӗлсе.

Сӑр ен чӑвашсен Сарри паттӑрӗ пур.
Ун хӗрӗ ӳсет-мӗн чипер те маттур.

Утпа ҫӳреме те арҫын пек ӑста,
Чӗлхи такӑнмасть ун кирек те ӑҫта.

Хусан ҫыннисем ҫакӑ чаплӑ хӗре
Ҫапла ҫаклатма тӗв тӑваҫҫӗ пӗрре.

Сарри килӗшет ӗҫкӗре сӑйланма,
Ҫапах инкекрен ӗлкӗрет сыхланма:

Турхан ӑсатать хӑй нукерӗн йышне
Хусан ҫулӗнчи вӗтлӗх-чӑтлӑх ӑшне.

Ытах тытӑҫмашкӑн сӑлтав тупӑнсан
Систерӗ Сарри — пусмӑрҫа пит ан шан.

Алманчӑ эшкерӗ хайхи ҫавӑнтах
Хӗре ҫаклатма май тупать чӑнахах.

Уяв пек ӗҫсе алчӑрарӗ чӑваш,
Сарри тавлашмасть, калаҫать пит йӑваш.

Никам та кӗтмен пуласса каплалла,
Сарри хӑй хӗрне парасса юталла.

Ак тухрӗ турхан хӑнасем ӑсатма,
Пуҫлать тараватлӑн вӑл ирӗк ыйтма:

— Эп най шӑхӑртса ӑсатам-и хӗре,
Лӑплантӑрччӗ манӑн хурланнӑ чӗре... —

Инкек çитессе те туймаççĕ пулас,
Лешсем йăл кулса ирĕк пачĕç хавас.

Ютсем тапранса çул çине тухнă май
Пĕрре шăхăртсан инçетре хурлă най,

Сарри янă йыш сăнă тытрĕ яштах,
Тепре шăхăртсан — ут утланчĕ вăштах.

Чăштах тухса тăнă пĕр ушкăн нукер,
Юта çиçĕм евĕр вăл пер те ӳкер.

«Чĕр мăшкăл курмашкăн çитмерĕ-çке хал,
Каçармĕ Хусан. Мĕн тăвам ĕнтĕ халь?

Пурнатпăр эпир икĕ вут хушшинче.
Мĕн чул-ши юн юхрĕ чăваш çĕрĕнче?

Мускавĕ илесшĕн тытса Хусана,
Хусан парăнма шутламасть-ха ăна.

Çапах вырăссем шав килеççĕ хĕссе,
Хусан хулине те, тен, илĕç кĕçех.

Чăвашăн тивет пуç тайма вырăса.
Унтах каймалла-тăр чуна упраса...» —

Çапла шухăшлать те Сарри çĕрĕпе
Ирпе çул тытать вăл Мускав çулĕпе.

Пуç тайрĕ çитсе вырăссен патшине,
Пĕлтерчĕ ăна чĕрери шухăшне:

— Кун памĕ Хусан чăваша пурпĕрех,
Мускав та çĕнтерĕ ăна чиперех.

Халь вырăс хӳтти çеç хăтарĕ пире.
Куллен пулăшса тăрăп эпĕ сире.

Вăрçа кайнă чух пырăп çул кăтартса,
Ытти хамашкал турханпа кар тăрса.

Чуна упрасамăр — пулар пĕр кавар:
Ыр кăмăл тытар малашне парма пар..

Шантарнă, тав тунă Сарри паттăра,
Чăнах та тытать сăмахне ку вара.

Анчах та кĕçех, темиçе çултанах,
Темме кӳрентернĕ Мускавĕ ăна:

Те пулнă илесшĕн турханлăх ятне,
Те çĕмĕрнĕ ун киремет катине,

Те çармăс-чăваш уйрăлас тенĕрен,
Те чăрсăр Хусан хистесе çитнĕрен —

Сарри тапăнать выръса та кайран
Ытти паттăрпа пĕр пулса Йăлăмран...

Пăтратнă ăна та пăтравлă тĕнче,
Çапах та юлман вăл чура шутĕнче.

Хĕрне те çĕрне упраса вилнĕрен
Ытарлă калаççĕ çапла ĕлĕкрен:

Çунатлă-мĕн пулнă мухтавлă турхан,
Вилет — çунатне хăйĕн хĕрĕ курсан.

## КĔМĔЛ АЛТĂР

Хусанăн хĕрĕх алăклă
Хăруш тĕрми çинчен хайланă
Юрру ăша хĕртсессĕн те
Санах эп куртăм, Тутирекĕм.
Хăрах куçпа пулсассăн та
Тахçантанпах курасшăн эпĕ
Çап-çутă кĕмĕл алтăрна, —
Ăна Пăкач-мĕн парнеленĕ.
Курассăм çеç те мар, хуллен
Хавас ăна тытса пăхма та.
Асамлă вăй кӳрессĕнех
Шав туйăнса тăрать вăл маншăн
Пăлхавçăсен йышне пухма
Сана çĕкленĕ харсăр кăмăл
Унта упраннăн ăш вĕçет,
Чĕнсе тăрать таса хăвачĕ.
Пур халăх ĕçченне савса
Мухтавлă вырăс утаманĕ
Ирĕклĕхе çĕнсе илме
Сана ал тăсрĕ ютшăнмасăр.
Чăвашсене пухас тесе
Ялтан яла пайтах хутларăн,
Улпут-хуçа сăнни тĕлне
Пулассинчен те шикленмерĕн.
Ĕç сыннисен кĕрешĕвне
Эс ĕмĕт çитнĕ пек вăй хутăн.
Тĕрме нуши лексессĕн те
Пачах та ӳкĕнмерĕн уншăн.

Ахальтен мар чунна-варна
Пусмăрçăсен кулли витернĕ.
Çав ирсĕр мăшкăл-асапа
Эс каçармашкăн пултараймăн.
Музейсенче çӳренĕ чух
Сан алтăрна курса пулмарĕ.
Кăмрăкланман-тăр вут çинче,
Çунсах кайман-тăр кĕмĕл савăт.
Кĕл пулнă çурт вырăнĕнче
Ăна тимлех, тен, шыраман-тăр.
Унта çитсе чакаланма
Тĕпчевçĕ тусăм та тĕв турĕ.
Сан кăмăлу та хускалсан
Атя пĕрле, тăванăм, эс те.
Тен, тунсăхларĕ халиччен
Пире кĕтсе çав кĕмĕл алтăр?

*1959— 1999*

## УЙ ХАПХИ УМĔНЧЕ

Аван-и, еплерех пурнан, тăван хапха?
Эс тахçанах сулăнайсаттăн ватлăха,
Çапах тирпейлĕ те тĕреклĕ курăнан,
Эс халь те кăмăллăн та çăмăл уçăлан.
Сана ял-йышăм йăванма-тӳнме паман,
Ахальтен мар-тăр юпусем кĕреш юман.
Кунта çитсе курмассерен яланхиллех
Ачалăхри ӳкерчĕк асăма килет.
Ял-йыш урам сарлакăшпе утса тухса
Вăрçа каякана яратчĕ ăсатса,
Унпа сывпуллашатчĕ санăн умăнта.
Мĕн чул çынна эс ăсатмарăн-ши кунта?
Пĕр тăрантас тулли ларатчĕç арçынсем,
Тăрать салтак ачи, алра ун — тутăрсем.
Пĕкке тирпейлĕн явнă шур алшăллипе.
Пырать-и ăйăрĕ пĕр евĕр юрттипе —
Шăнкрав сасси таçта çити ян-ян! каять,
Хуткупăс хурлă юрă кĕввине калать.
Ай-хай куççульлĕ-çке салтакăн юррисем!
Пыраççĕ вĕлкĕшсе эрешлĕ тутăрсем.
Салтак ачин выртатчĕ çул инçе-инçе,
Çĕтетчĕ тăрантас тӳпемĕн леш енче...
Сахал çын таврăнчĕ, чăлах хăш-пĕрисем.
Сахаллăн-и мăшрисĕр юлчĕç инкесем?..
Эп çакă пĕчĕкçĕ сăваплă вырăна
Епле хисеп те чыс тумасăр пурăнам?

Çавăрăнса килнисемпе пуç хунисем —
Мана, пире çак телее пиллекенсем.
Хапхам, пурнас çынсем санпа пуплессине
Пуплем-и эпĕ халь ларса çерем çине?

## КУРАК ТĂМАНĔ

Кăмăл çаврăннă самант-ши,
Те йăли ун çавнашкал —
Хĕл пуçларĕ юр тăкмашкăн,
Юрĕ нӳрĕ, кăпăшка.

Шурă тĕнчере утатăн,
Шурă кун куçа шартать.
Юр кăна умра куратăн,
Юр кăна çавăрттарать.

Кураксем, эппин, килеççĕ
Çуркунне хыпарĕпе,
Васкаса иккен çитеççĕ
Çак тăманăн хӳттипе.

Сас парассăн туйăнаççĕ
Çывăхрах сисмен хутран.
Ахаль мар-тăр тунсăхлаççĕ
Йăмрасем вĕсем çукран...

Вашават сывпуллашать-мĕн
Сивĕ хĕл пирĕнпеле,
Чыс тумашкăн тарават-мĕн
Юлашки юрĕпеле.

Чыс тӑвать курак тӑманӗ,
Шеллемерӗ пурлӑхне:
«Курса юлӑр, — тет, — ан манӑр
Шурӑ юрӑн ҫутине!»

## ХӖРТ-СУРТ

*Манюк мӑшӑрӑма*

Авал чӑвашӑн кӑмаки ҫинче
Хӗрт-сурт тӳлеккӗн пурӑннӑ иккен.
Пӑри пӑтти чӳкленӗ каҫсенче
Вӑл курӑннӑ шур тумлӑ ыр пикен:
Сурпанлӑскер, вӑл уйӑх ҫутипе
Пӗтӗр-пӗтӗр-р! арланӑ кӗнчеле.
Ҫапла кил пурнӑҫне хӑй ӗҫӗпе
Пыма пилленӗ сӗт ҫулӗпеле.
Е кучченеҫ пуҫламалла пулсан
Малтан ӑна вӑл пӑхнӑ астивсе,
Е ӗҫкӗре хаваслӑ сӑйлансан
Ӑна тав тунӑ тав сӑя тесе.
Ыр кӑмака хуҫи, кил-йыш сыхчи,
Вӑл ҫирӗп тытнӑ пӳртӗн никӗсне.
Ӗрчевлӗ пултӑр тенӗ ачипчи,
Сыхланӑ кил тирпей-илемлӗхне.
Ай-хай маттур иккен чипер хӗрт-сурт
Ытах та харкашу лӑпланмасан
Килтен писет вӑл, саланать тет ҫурт,
Ӑнмасть вара хай пурнӑҫу та сан...

Эй, мăшăрăм! Нумай-нумай сăмах
Сана каламаллаччĕ тав туса —
Телей тĕрекĕ пулнă тусăма,
Нимех те калаймарăм-çке тупса.
Эй, ыр хĕрт-суртăм, ырă пирĕшти!..
Çапла чĕнем-и халĕ те пулин!
Эс пуррипе ăнать кун-çул утти,
Эс пуррипе вăл туйăнать туллин.
Кил-йыш перекетне, тирпейлĕхне
Тытса пыратăн эсĕ чи малтан.
Чĕре канăçлăхне, çирĕплĕхне
Эсех упратăн пĕтĕм вăй-халтан.
Эс — манăн куç илемĕ, чун ăшши, —
Пыринччĕ вăл элчелĕм çитиччен.
Сана епле юравлă пулам-ши
Эс хăв мана юранă пек хальччен?
Ар пуçăмпа, тен, манăн ытларах
Вăй хумаллаччĕ йывăр кӳлĕмре.
Пĕлсем эппин: ман ĕмĕт çапларах —
Кун-çул ăна кăлартăрччĕ тӳрре!

## ПИЛЕШ ТАТАТĂП

Юр ӳкрĕ. Сивĕтет. Пилеш тататăп.
Каçар, пилеш, сана, тен, амантатăп:
Тураттусем кӳреннĕ чунпала-ши
Унтан-кунтан тăк-тăк! ай чышкалаççĕ.
Эппин, пулам тата асăрхануллă.

Çырлу тăртаннă калама çук тулăх:
Пăрçа пекех яка та çутă хĕрлĕ, —
Анранипе ман ÿкес мар пуçхĕрлĕ.
Çупкам çумне çупкам ÿссе çыхланнă —
Чĕп-чĕрĕ фейерверк пек ярăмланнă.
Эппин, çитес çулта хирти тыр-пулă
Умри пилеш пек ытлă-çитлĕ пулĕ...

«Пăхма хитре пилешĕм, йÿçĕскерĕм!..» —
Çапла юрланине-çке асилейрĕм.
Тутли-йÿççи санри пекех пĕр шайăн
Курма тивет çынна кун иртнĕ майăн.
Ай-хай йÿççи пачах та тутанмасăр
Кун-çул иртейĕ тутăсăр-масасăр...

Ак тулчĕ ĕнтĕ темиçе витре те,
Çитет, çитет! Халь килелле кĕретĕп.
Турат çинче çырла кăшт-кашт юлайтăр:
Унпа ыр тусăм уйăп савăнайтăр.
Илемшĕн хăварни те пулмĕ пăсăк,
Иртен-çÿренĕн кăмăлĕшĕн — кăсăк...

Асаттесем пилеш вăйне ĕненнĕ:
Тураттипе усалсене хĕненĕ.
Вĕсен йăлишĕн, сых ятне темелĕх,
Турат хуçса илес килет пĕтевлĕх.

## ВУТĂШПИ

Хуллен ишетĕп çăмăл кимĕпе,
Пыратăп авăсса кĕсменĕмпе.
Çитмен кунта паян çил ачисем —
Кӳлле хумхантармаççĕ-ха вĕсем.
Тӳлек. Илтеймĕн нимĕнле сасса —
Шăй-шай юрлинччĕ кайăк, иçмасса
Ытах пуçтах çăрттан кӳкĕрчене
Хускалтарин кăштах енчен енне.
Тавралăхпа пыратăп киленсе,
Анчах кас-кас илетĕп шикленсе:
Шывран е кӳл хĕрри хăвалăхран
Пике сиксе тухас пек ăнсăртран.
Ах, Вутăшпи, курасчĕ ман сана!
Курнатăн имĕш хăв саван çынна.
Çапах та тĕл пулас килет пĕрре
Чи хӳхĕм пӳллĕ-силлĕ сар хĕре.

## ВАТ ĂШШИ

Иртенпех пӳлĕме
Çутă сарă сăн çапнă.
Ахаль мар шӳлкеме
Хурăн ушкăнĕ çакнă.

Систерет пек пире:
Ват ăшши — виçĕ кунлăх.
Пулмĕ ку сивĕре,
Ăшă кун шутлă юлнă.

Хускалма та хăрать
Шăплăхра çил ачи те,
Тĕлĕнсе вăл тăрать:
Ашкăнмашкăн хĕл çитĕ.

Итлесем хурăна:
Шӳлкеме те çеçтенкĕ
Çилсĕрех таврана
Сас ярать чĕнкĕр-ченкĕр!

Сар тавралăх шевли
Янăрарĕ ачашшăн.
Халь этемĕн алли
Çунат пек авăсасшăн.

Юлашки вăй-халпа
Юлашки хут çĕкленнĕн
Чи ĕлккен хавалпа
Чун-чĕремĕр хĕмленнĕ.

## ИНКЕК

*(Л. Койдула майлă)*

Сан юлташу пулмашкăн
Пӳрчĕ ĕмĕрлĕх тӳре.
Тăвăр сукмакпа çума-çумăн
Тиврĕ утмашкăн пире.

Аллăм, сăн-питĕм, тумтирĕм
Манăн çĕр евĕр хура.
Сан куллуна юратмастăп,
Савнăп куççулĕ кура.

Сарă хĕвел ăшшăн-ăшшăн
Сан ыйхуна сириччен
Пырăп та тăрăп хаяррăн
Санăн пуçу вĕçĕнче.

Сӳнĕ каç шуçăмĕ — эсĕ
Лăштăррăн ярăн ална,
Хаш! сывласа çеç илейĕн —
Сиввĕн тинкерĕп сăнна.

Курнăп сана тĕлĕкре те,
Эс хăраса вăранан.
Çамрăк-и эсĕ е ватă —
Пăхăн ялан куçăмран.

Ман аллăмсем пăчăртаççĕ
Ал-уруна ĕмĕрех:
Ним шелleme те пĕлмесĕр
Кĕрĕç касса ӳт-тире.

Сан çӳç-пуçна пас тыттарăп,
Илĕп чĕрей илемне.
Эс — çĕр ачи, çĕр пулатăн,
Кайăн çапла çĕр айне.

Терт — ман юратнă аттеçĕм,
Манăн аннеçĕм — Асап.
Ятăм — Инкек. Эсĕ ĕмĕр
Чĕнĕн çапла асăнса.

*1965—1990*

№ К-2909

## ТĔНЧЕНЕ ТЫТСА ТĂРАТĂН

Ăшă пиллĕ Турă,
Пуринчен те Эсĕ ырă:
Этеме мĕн кирлине
Эс кӳретĕн мĕн пурне.

Тӳрĕ чунлă Турă,
Пуринчен те Эсĕ тӳрĕ:
Кун çитсессĕн чăннине
Пĕлтеретĕн çынсене.

Эсĕ чи хăватлă,
Пуринчен те аслă ятлă:
Çакă аслă тĕнчене
Эс кĕртетĕн йĕркене.

Вăрахчен тӳсетĕн,
Çын вăйне виçетĕн:
Тĕрĕслетĕн тӳсĕмне,
Хӳтеретĕн ĕç умне.

Пĕтĕмпех куратăн,
Йăлт пĕлсе тăратăн:
Тĕнчере мĕн пулнине —
Ыррине, усаллине.

Усалли урсассăн,
Урине хурсассăн
Пăркăчлатăн эс хăйне,
Чакаратăн ун вăйне.

Ырă вăй ырсассăн,
Иртĕхсе тăрсассăн
Кăтартан тивĕçлине —
Вăл çитет кун-çул вĕçне.

## СĂВАПЛĂ ХӲТЛĔХ

Сан пек мухтавлă-чаплă,
Сан пек хăватлă-вăйлă,
Сан евĕр пархатарлă-ырă,
Сан евĕр тĕрĕс-тӳрĕ,
Сан евĕр çирĕп-тӳсĕмлĕ,
Сан пек хисеплĕ-аслă,
Сан евĕрлĕ хаяр-кăра
Никам та урăх пулманран
Сан ятупа тупа тăватпăр.
Сана ĕненнĕрен,
Санран хăранăран
Сан ятупа чыса упратпăр.
Сăваплă хӳтлĕх аслă хунтă
Пулса пире сыхланăран
Чуна пама та хапăллатпăр.

## ЯВАПЛĂХ

Туррăмăр пире пăхсан та —
Ырлăх çитмĕ нихăçан та,
Курасах тесен тивлет —
Хăвăн вăй хума тивет.

Кашниех пиртен яваплӑ,
Ыр ёҫпе кӑна сӑваплӑ:
Кулленхи ыр ёҫпеле
Пухӑнать чӑн-чӑн телей.

Эпĕ — саншӑн, эсĕ — маншӑн
Сӑмаха тытсан, тӑванҫӑм,
Пархатарлӑ ҫак йӑла
Сиплĕх кӳрĕ вӑй-хала.

## ҪӲЛТИ ХУҪА

Тӑванӑмсем, пире пурне те
Ҫӳлти Хуҫа тытса тӑрать.
Хӑй чаракне те, ирĕкне те
Пире ялан Вӑл туйтарать.

Илемлĕх, канлĕх, шайлашулӑх
Ҫӳлти хӑват пире парать.
Тискерлĕх, ҫӑткӑнлӑх та шухлӑх
Тӑнӑҫлӑхран сирсе ярать.

Чуну виҫесĕр хатарланĕ —
Тĕнче Хуҫи курсах тӑрать:
Хуҫа пулмашкӑн паттӑрланнӑ
Этем валли асап ярать.

## КӐТАРТСА ПЫРСАМЧЧĔ

Ҫынлӑхлӑ пулмашкӑн,
Ҫылӑхсӑр юлмашкӑн
Пĕлейместпĕр хамӑр.

Эй, Çӳлти Хуçамăр,
Тӳсĕмлĕх парсамччĕ,
Кăтартса пырсамччĕ.

Виçере тăмашкăн,
Кирлĕ пек тумашкăн
Пĕлейместпĕр хамăр,
Эй, Çӳлти Хуçамăр,
Ăс парса пырсамччĕ,
Кăтартса пырсамччĕ.

Çураçу тупмашкăн,
Усалтан хăпмашкăн
Пĕлейместпĕр хамăр.
Эй, Çӳлти Хуçамăр,
Хăватна ярсамччĕ,
Кăтартса пырсамччĕ.

## ÇЫЛĂХ МАНА

Ах, намăс та çылăх мана!
Епле пусарас-ха чуна?
Атте-аннене чысласа
Куллен пулăшма пĕлеймерĕм.
Тăван-пĕтене чысласа
Тăван пек пулма пĕлеймерĕм.
Ырă тунă çынна чысласа
Хăйне ыр тума пĕлеймерĕм.
Чунтан кураймастăп хама,
Ăçта-ши чикес пуçăма?

Ах, намăс та çылăх мана!
Епле пусарас-ха чуна?
Ытти çын ĕçне ĕç тесе
Хăш чух уяма пĕлеймерĕм.
Ултав-суяна сивлеме,
Тӳрришĕн тăма пĕлеймерĕм.
Пĕр тытнă ĕçе тимлесе
Тирпейлĕ тума пĕлеймерĕм.
Чунтан кураймастăп хама,
Ăçта-ши чикес пуçăма?

Ах, намăс та çылăх мана!
Епле пусарас-ха чуна?
Сăхлантăм хăш чух янттине,
Хама хытарма пĕлеймерĕм.
Лексеттĕм усал аллине —
Хама хăтăрма пĕлеймерĕм.
Курсан та теприн асапне —
Унран хăтарма пĕлеймерĕм.
Чунтан кураймастăп хама,
Ăçта-ши чикес пуçăма?

## ЫРĂПА УСАЛ

Ырăпа усаллăх
Кĕрешеççĕ яланах,
Тытăнса тăмалăх
Панă Эсĕ хавална.

Ырă вăйлансассăн —
Усалли чăрсăрланать.

Ыррӑн вӑй чаксассӑн —
Усалли паттӑрланать.

Тайӑлсах ан кайтӑр
Ҫак тӗнчемӗр тараси.
Пулӑшса тӑрайтӑр
Ҫыннӑн харпӑр хӑй сасси.

## ТӐ̆РЕ

Тӗнчери кӑра тӳремӗр,
Шайлашулӑх кӳрекен!
Лӑпкӑн ирттӗр пирӗн ӗмӗр,
Сыхласамччӗ инкекрен.

Ырӑ кӑмӑллӑ пулмашкӑн
Ӑс парсамччӗ пуҫӑма.
Усалтан тарса юлмашкӑн
Вӑй парсамччӗ чунӑма.

Ҫылӑха кӗрсе пӗтсессӗн
Тасатсамччӗ ирсӗртен,
Тӗрӗсрен ята ҫӗртсессӗн
Хӑтарсамччӗ сехметрен.

Ыррине ырах темелӗх,
Усала усал теме
Вӗренсе тӑрсан этемлӗх
Пит хӑяймӗҫ иртӗхме.

Тĕрĕслĕх çула çутаттăр,
Çылăхпа ултавлине
Уйăрса илме кăтарттăр,
Пулăштăр сăваплине.
Пăрăнса этем юлаймĕ
Явапне тытассинчен.
Каçару ун чух пулаймĕ —
Иртме çук тивĕçнинчен.

## ĂС ПАРСАМЧĔ АЧАМА

Эй Туррăмăр, Туррăмăр,
Хӳтлĕхĕмĕр, ыррăмăр!
Айван кăна ачам пур,
Ӳстерессĕн-çке маттур.
Ĕмĕрхи йăлапала
Унăн пурнăç тăсмалла.

Айван кăна ачама
Пархатарлă ăс парсам,
Хамран юлан тăхăма
Хунама хăват ярсам,
Çын хуйхине чухлама
Хаярлăхран хăтарсам.

Куллен-кунах ĕç тĕлне
Çынран юлми çиттĕрин,
Ашшĕ-амăш пехилне
Тивĕçлĕрех ӳстĕрин,

Еткерлӗхне — хӑй килне
Хитрелетме пӗлтӗрин.

Астумасӑр ӳкесрен
Сыхлануллӑ пултӑрччӗ,
Тӗрлӗ инкек-синкекрен
Сывӑ тӑрса юлтӑрччӗ,
Ҫын умне тухмассерен
Ҫын кӑмӑлӗ тултӑрччӗ.

## ТАВ СӐМАХӖ

Хӗнлӗхре чуна ҫӑлмашкӑн
Тархаслатпӑр вилес пек,
Уншӑн парӑмлӑ пулмашкӑн,
Тав тумашкӑн пӗлес пек.

Пӗтесех ҫӗртен асамлӑн
Хӑтарсан та хамӑра
Е кӗтмен телей капламлӑн
Ҫуталсассӑн та умра —

Тав тума сайра пӗлетпӗр
Е манатпӑр пӗтӗмпех,
Шухӑшсӑр пурнатпӑр эпӗр
Пилсӗр чунӑн ӑсӗпе.

Ҫӑкӑр-ҫимӗҫ ӗмӗр-ӗмӗр
Юратать татулӑха.
Хамӑра пӑхан ырсемӗр
Тивӗҫ чӑн мухтавлӑха.

Пин-пин ырлăх панăшăн та
Тав, мухтав, Тĕнче Хуçи!
Тав хальччен упранăшăн та,
Панăшăн телей уççи!

Сăмахпа çеç мар тав тăвăп,
Ĕçĕмпе те чыс кӳрем.
Асăмра сума та сăвăп,
Юрă хывĕ чун-чĕрем.

* * *

Турă, Эсĕ çук пулсассăн
Кам-ха ыр Аттемĕр пулĕ?
Турă, Эсĕ çук пулсассăн
Кам-ха чăн Хуçамăр пулĕ?

Турă, Эсĕ çук пулсассăн
Тӳрĕлĕх камра-ха пулĕ?
Турă, Эсĕ çук пулсассăн
Чăн Тӳремĕр кам-ха пулĕ?

Турă, Эсĕ çук пулсассăн
Ăс паранĕ кам-ха пулĕ?
Турă, Эсĕ çук пулсассăн
Тĕнчене тытан кам пулĕ?

**КĔЛĔ**

Тилмĕрсе каланă кĕлĕ
Саншăн пултăр тĕллĕ:
Калаçатăн Турăпа,

Калаçатăн ырăпа,
Пĕртăванлăх вăйĕпе
Çыхăнать санпа тӳпе.

Çыннăн чăн телейĕ
Кĕлĕрен килейĕ.
Чăнласа ыйтан чĕлхе
Тивĕç пулĕ пиллĕхе.
Илĕн ху тивĕçлине,
Ан ăмсан ытлашшине.

Çитĕ сан патна тивлечĕ —
Çураçу сипечĕ.
Кӳрĕ çăлăнăç сана,
Кӳрĕ çăмăллăх чуна...
Кĕлтума ан ман тесе
Хушнă мăн асаттесем.

* * *

Мăшăрăм, пурнăç тĕрекĕ, —
Турă упратăр сана.
Мăшăрăм, килĕм кĕрнекĕ,
Турă упратăр сана.

Манăн вăй-халăм хавшарĕ,
Турă упратăр сана.
Сансăр кил-çуртăм арканĕ,
Турă упратăр сана.

Пурӑн, ан хуҫӑл, ҫунатӑм, —
Турӑ упратӑр сана.

* * *

Мӗскер вӑл сӑваплӑх? —
Вӑл ҫыннӑн ӗлккен пархатарӗ,
Усал шухӑша пӑрахтарӗ.
Сӑваплӑх вӑл — аслӑ яваплӑх.

Мӗскер вӑл сӑваплӑх?
Вӑл ҫыннӑн чи ҫутӑ ӑс-халӗ,
Ҫутатӗ — тискерлӗх ҫухалӗ.
Сӑваплӑх — сӑпай сӑн-сӑпатлӑх.

Мӗскер вӑл сӑваплӑх?
Вӑл ҫыннӑн чи хӳхӗм илемӗ,
Ун пысӑк та тертлӗ ҫӗклемӗ,
Ҫын тӳснӗ ӳпкевсӗр асаплӑх.

* * *

Усала ан асӑн.
Тӗлсӗр асӑнсассӑн —
Илтӗн урнӑ сасӑ:
Юрӑ юрласа
Ярӗ тӑлласа.

Усала ан асӑн.
Тӗлсӗр асӑнсассӑн —
Илтӗн урнӑ сасӑ:

Юрлăн çав юрра,
Пулăн эс чура.

Усала ан асăн.
Тĕлсĕр асăнсассăн —
Илтĕн урнă сасă:
Илĕ ăс-хала,
Тухăн усала.

* * *

Каçару ыйтмашкăн
Йывăр, йывăр, йывăр.
Ăшăмра тытмашкăн
Ыйтнинчен те йывăр.

Каçарсам, тăванăм, —
Сăмахпа амантрăм.
Каçарсам, юманăм, —
Пуртăпа амантрăм.

Каçарсамччĕ, Туррăм,
Каçарсам, тавралăх:
Пысăк йăнăш турăм,
Сирĕлтĕр кăралăх.

* * *

Турă вырăнне ан хапсăн,
Эс тăраймăн Ун вырăнĕнче.
Вăл хĕвел пекех пулсассăн,
Эс — тусан пĕрчи Ун çумĕнче.

Турă хушнă евĕр пурăн,
Пурăн Унăн ырă йĕркипе.
Кăмăлна кура ыр курăн
Çуталса хĕвелĕн ăшшипе.

Çупăрлĕ сана тăванлăх
Пархатарлă туртăм хĕрнĕрен.
Çитĕ лăпкăлăх яланлăх
Çураçу тупмашкăн пĕлнĕрен.

Пурнăç иртĕ пархатарлă,
Илемлетĕн эсĕ тĕнчене.
Кунĕсем çитсен хатарлă
Турă çăлĕ тӳрĕ чунлине.

## ХĔВĔШӲ

Вĕçсĕр-хĕрсĕр хĕвĕшетпĕр,
Пуршăн-çукшăн кĕвĕçетпĕр.
Ним тăрлавсăр тĕркĕшетпĕр,
Ним сăлтавсăр тиркешетпĕр,
Ыр тумашкăн ӳркенетпĕр,
Чапшăн, мулшăн хĕртĕнетпĕр
Ырлăхра чух иртĕнетпĕр,
Хурлăхра чух ӳкĕнетпĕр.

Мĕн тери пирте айванлăх,
Çавăнпа йăшать тăванлăх.
Мĕн тери пирте наянлăх!

Çилпеле вĕçет пуянлăх.
Ашкăнать пирте куштанлăх
Çураçтарĕ çынлăх, танлăх.
Тăрăшатпăр та паянлăх —
Çухалать пин хут яланлăх.

Эй, этем! Тĕнче илемĕ
Саншăн тепĕр хут килеймĕ.
Мул çитеймĕ туянмашкăн,
Ырă пул эппин, ан ашкăн.
Пурăн пурте савăнмалăх,
Ăшшăн-ăшшăн асăнмалăх.
Тупăн чăн телей. Тăванăм,
Пурнăçпа маттур йăпанăн.

*2000— 2001*



# ПОЭМĂСЕМ



## ЮРĂ — ХАЛĂХ КУН-ÇУЛĔ

*(«Чăваш юрри» поэмăран)*

Юррăмăр, санра упраннă
Пирĕн иртнĕ кунăмăр.
Тертлĕхре-хĕнре шăраннă
Ăсăмăр та чунăмăр.

Хамăр халăхăн çул-йĕрĕн
Ят-шывне калană май
Эс ытарлăн асилтертĕн
Асапне пире нумай.

Китайра ÿсет шур тулă...
Телейÿ ун пек инçе.

Чăнкă та ула сăрт-туллă
Курăнать санри тĕнче.

Пĕлтермест-ши ун сăнарĕ
Алтая та Кавказа?
Çитнĕ несĕл хĕрĕ-арĕ
Ту урлах кунта каçса.

Тулăх çĕрлĕ Шурă Атăл
Пăлхара та Сăвара
Вырăн панă, пулнă хапăл:
Тымарлан çак таврара!

Ырлăхне вăл кӳнĕ ĕнтĕ:
Шурă Атăл — ырă ят.
Темиçе çĕр çул иртсен те
Ахрăм евĕр янăрать.

Çĕнĕ хуласем çĕкленнĕ
Тахçанхи ячĕсемпе:
Авала упрасчĕ тенĕ,
Мăнаçланнă вĕсемпе.

Чăнкă мар пулсан та çĕрĕ —
Чĕкету иккен пĕри.
Çухалман Кавказăн йĕрĕ —
Ĕлĕкхи пекех юрри:

№ К-2909

Улмуççи туйи пек чикĕ
Хулана хăпарасси...
Мереченĕ, Керменчукĕ —
Кăнтăрти кун-çул сасси...

Арабсем ишсе хăварнă
Ешĕл, хӳхĕм Меречен
Çĕнĕрен ӳссе хăпарнă,
Инçе мар вăл Пӳлертен.

Мереченĕ те Пӳлерĕ
Сăхă куçлă тăшмансен
Вут-хĕçне сирме тимлерĕ,
Пĕтрĕ йăлт юлашкинчен.

Хĕрĕ е патши юрланă
(Шур кермен çунса пĕтет),
Таврăнма сунса хурланнă,
Акăш пулнă — вĕçнĕ тет.

Йĕнĕ вăл ĕмĕтленсе-ши:
Тăхăмĕ тăван çĕре
Таврăнса тĕпленессе-ши
Туйнă пулĕ чун-чĕре.

Вĕçнĕ, аннă çавă акăш
Хай Хусанăн çырмине.
Вăл шутланă: акăш-макăш
Хӳтлĕх кӳрĕ малашне.

Çук иккен, шыв çи хурахĕ
Хăраман сĕм вăрмантан.
Савнăç-хурлăх эхĕ-ахĕ
Хăпас çук чăваш çынтан.

Тутлă çимĕç пулнă уншăн
Çыр хĕррин пур-çук çырли:
Мĕн пиçни — тăван пек чуншăн,
Пиçменни — хурах валли.

Улпутпа тӳре пурнасшăн
Мăн хула таврашĕнче:
Çавăнпа супать Хусаншăн,
Мăсăльман хăй — чунĕнче.

Чăваша Çавал, Сăр енĕ
Туртнă хăй ирĕкĕпе.
Ĕмĕртен çын ĕмĕтленнĕ
Пурăнма хăй йĕркипе.

Пурпĕр хан-Хусан йăлмакĕ
Тухайман ун мăйĕнчен.
Хăтăлсан та — пур амакĕ:
Пăхăн вырăс кусĕнчен.

Ырлăх курнă хан улпучĕ,
Хут вылятнă Хусанта.
Ылтăн пулнă ярлăк хучĕ
Мухтанма Аçтăрханта.

Хусанне хăвах хывсан та
Эсĕ çук ун сăнĕнче.
Чар Иван хуçа пулсан та
Ӳснĕ вăл çын пуç çинче.

Сивĕ шыв — Хусанăн шывĕ,
Хулă хатĕр чиерен,
Тӳс юлмашкăн чĕрĕ-сывă
Шарт та шарт! пĕçертнĕрен.

Ырринчен ытла инкекĕ
Çырнă-мĕн çамка çине.
Христиан пулмах сан лекĕ —
Талпăнан çĕн çĕрсене.

Хăв майна хурсассăн çĕçĕ —
Çийĕн çав сысна ашне.
Чăн тесе каланă ĕçĕ
Тем кăтартĕ малашне.

Читлĕхри пек сикнĕ майăн
Куртăн калмăк тыткăнне.
Утрăн аптраса нумайăн
Раçăнпа Пăкач патне.

Тухрĕ те утел кантурĕ,
Çыннăн юнĕ тĕслĕскер,
Хăй чури сана вăл турĕ,
Пулчĕ высă та тискер.

Лашманпа матрос таврашĕн
Нухайкки вĕтет сана:
Питĕре карап тăвасшăн
Туртрăн хăвăн юманна.

Эс Раççейшĕн, хăв енӳшĕн
Пиçрĕн пурĕ пĕр ăшша.
Çитрĕн пуçлăх-ĕненӳшĕн
Висла урлă Парижа.

Миçе хут Дунай-Карпатăн
Пăшалпа иртмен чăваш!
Паттăр пек унта утатăн,
Килӳнте кăна йăваш...

Каласа ăçтан пĕтерĕн? —
Тупсăмне атя тупар.
Юрă, эс татах пĕлтерĕн
Кунашкал синкер хыпар.

Мĕн тери тӳсме пултарнă!
Ахăр, халăх мĕскĕн мар.
Курăнсассăн та мăнтарăн —
Нишлĕ мар-мĕн арăм-ар.

Ку виле пуçланă халăх
Тенĕ ĕлĕк чăваша,
Çук юрри ун савăнмалăх,
Хурлăх çеç кӳрет ăша...

Юрăпа сирсе ямасăр
Сирĕн эс мĕнпе хуйха?
Чун хускалмĕ уямасăр —
Тен, юрлать асăмлăха...

Ытларах тата мĕн калăн:
Çакăн чухлĕ тӳснĕскер,
Ал тытса ĕçлер кал-каллăн,
Хӳхĕмрех пурна пĕлер!

*1990*

## ÇĂЛĂНĂÇ

Асăнатпăр манаймасăр:
Чăвашсен кĕнекине
Çинĕ янă уямасăр
Темĕнле тискер ĕне.

Упранман чăваш кун-çулĕ
Хамăр çырнă хут çинче,
Татăк-кĕсĕк çеç тĕл пулĕ
Ыттисем çырнисенче.

Халăхри халап хавалĕ
Кĕнеке пекех иккен:
Хӳхĕм сăнарпа вăл калĕ
Авалхи тав-шав çинчен.

Савнӑ халӑхӑн мухтавӗ —
Чун сасси те чун пахи —
Пӗтӗмпех иккен унта вӑл,
Упранать чи лайӑххи.

Акӑ еплерех сӑнланӑ
Чӑваша хӗн вӑхӑтра,
Ыр кун-ҫул пилленӗ-панӑ
Татӑклӑ пӗр тапхӑра.

I

Ял-хула виртпе кӗрлерӗ,
Вӗҫсӗр-хӗрсӗр — ҫарату.
Тулхӑрчӗ тӗнче тискерӗ —
Кашкӑртан усал Патту.

Паттӑрсем тем чул тӑратрӗҫ
Тӑшмантан хӳтӗленме,
Сӑвара ҫапах аркатрӗҫ —
Тӳсеймерӗ чул хӳме.

Пӳлере ҫӑлма пӳрмерӗ,
Пӑлхара та вилӗмрен.
Ах, мӗн чул этем ӳкмерӗ! —
Тӑраймарӗҫ ӳлӗмрен.

Халӑхӑн вилес пек чунӗ
Хӑтӑлчӗ аран-аран.

Пытанмашкăн тиврĕ унăн,
Хӳтлĕх пачĕ вар-вăрман.

Пĕлӳçпе ăсчах мăчавăр —
Тиркесе тăман ăна:
Пăврĕ майкăч, çăтрĕ авăр,
Хăваларĕç тыткăна.

Юхăнми епле-ха юлăн? —
Тăраймарăмăр тату,
Çавăнпа пире хăюллăн
Çапрĕ çĕр çăтман Патту...

Иксĕр çул ытла тӳсетпĕр
Чун илес пек мăшкăла.
Ушкăн-ушкăн тĕпĕр-тепĕр
Çаратса çӳреç яла.

Çитмĕл çичĕ тĕрлĕ хырçă
Хырчĕ пирĕн хырăма.
Халăх тӳсрĕ, халăх ырчĕ —
Тивĕç-шим капла хăрма?

Нухайсем килсе кĕреççĕ
Çавраçил пек тустарса.
Тыткăнра хĕрсем йĕреççĕ —
Кам кăларĕ хăтарса?

Киреметсене çунтарчĕç:
«Кай, пуççап Мăхамета!»

Тутара чылай кӑларчӗҫ:
«Ӗнтӗ сут чунна юта».

Нухая парасшӑн имӗш
Хан эсрелӗ Вирьяла.
Ҫакӑ тамӑк юлчӗ-ши-мӗн?
Халь ҫавна-и курмалла?..

Хан йытти ятне туянчӗ
Эсремет пек Урасмет.
Чӑваша пачах вӑл манчӗ,
Сӑвӑс пек пире ӗмет.

Вӑрласа каясшӑн пулчӗҫ
Хусансем Сарри хӗрне.
Мӑшкӑла хӑйсем ҫеҫ юлчӗҫ —
Парӑнчӗҫ тӗкӗрҫсене.

Акӑ вырӑссен ҫӗршывӗ
Вӑй илсе пырать ҫуллен,
Атӑл урлӑ та ҫул хывӗ
Малашне хуллен-хуллен.

Ханӗсем тем чарӑнмаҫҫӗ —
Тапӑнаҫҫӗ Мускава.
Вырӑссем те парӑнмаҫҫӗ —
Тустарса ярӑҫ шавах.

Сахал мар юнпа хӗрелчӗ
Хусанпа Мускав хушши.

Хан-хурахсене — эсрелччĕ!
Ах, хăçан хупланĕç-ши?

Кирлĕ марччĕ вăрçă-харçă
Нихăш хура халăха.
Тутарне те вăл хăварчĕ
Пинĕн-пинĕн тăлăха.

Çăмăл мар хырçи-марçи те,
Тутарне те вăл хирет.
Акă халь ачи-пăчи те
Ашшĕсем çукран йĕрет.

«Вырăспа тус пулмасассăн,
Пурăнсассăн хирĕçсе
Çĕтĕ ларĕ пирĕн сасă», —
Терĕ мăкшă та ирçе.

Çакăн евĕр шухăшланă
Шур сухаллă ватăсем.
Пăлханмашкăн та чухланă —
Çитеймен хăвачĕсем.

Ухă тытнă мăн йышпа та
Пĕчĕкçĕ ушкăнпала
Сахал мар çĕкленчĕ паттăр
Çапăçмашкăн ханпала.

Ак Ахплат çитсе тустарчĕ
Хан çар пуçĕн хулине.

Тыткăнран чылай хăтарчĕ
Хĕрсене те яшсене...

Ĕнтĕ çитĕ пуç таймашкăн
Вăр-хурах пек хансене.
Вăхăт пирĕн ал тытмашкăн
Кӳршĕмĕр вырăссене.

Ĕмпӳре ларатчĕ Анчăк,
Хамăр халăхшăн — айташ.
Халăх ыйтрĕ — хăюланчĕ.
Хан, унпа ан чăкăлташ!

Халăха хаяр тытмашкăн
Хистесе тăрать Хусан.
Хăш-пĕрне тытса хупмашкăн
Хăйрĕ Анчăк, тарăхсан:

«Шутласа та кăлараймăр
Хăвăр мĕн çунтарнине.
Халĕ, — терĕ, — тутансамăр
Сар кĕлетĕн кăварне!..»

Ханăн мăшкăл мелĕ лайăх:
Тиркемест вăл патшана.
Ут çине утланмалла-и:
«Чĕркуçлен!» — тет ват çынна.

Хан вара пусса хăпарĕ
Хул çине те пуç çине.

Чăтрĕ-чăтрĕ — чăтаймарĕ,
Леш каять Мускав енне.

Тукайпа Пике ĕмпӳ те,
Анчăкпа Сарри пекех,
Халь Мускавшăн ĕнтĕ питĕ
Ĕç тухмасть капла текех!

II

Халăх кăмăлĕ çемçелчĕ:
Вырăспа ан кĕр тава!
Çур пин çын ытла-тăр элчĕ
Тухрĕ кайрĕ Мускава.

Чăвашпа пĕрле ăсаннă
Çармăссем те ту енчен.
Вĕсене те хан Хусанĕ
Пусранах шăлман иккен.

Элчĕсем вара каларĕç
Пуççапса Чар Ивана:
— Вилĕмрен пире хăтар эс,
Тайма пусăмăр — сана.

Ан хăварччĕ ăраскалсăр,
Эс илсем хăв хӳттӳне.
Хамăр халĕ пурпĕр халсăр
Çĕнтермешкĕн хансене. —

Чар Иван сăмахĕ çирĕп:
— Пит аван! Пурĕпĕрех
Хусана тĕм-тĕкĕр сирĕп —
Тек ан хиртĕр вăл пире!

Кунĕсем иртсе пыраççĕ —
Вилĕм пилсĕр хураха!
Ун çывхарчĕ ĕнтĕ касĕ,
Вăл пыраймĕ вăрăма.

Тайнă пуçăршăн хăтарăп
Виçă çуллăх ясакран.
Ĕмĕрлĕх сире халь парăп
Парне хучĕ хам алран.

Хусанпа вăрçма тухатпăр —
Хатĕр тăччăр тĕкĕрçсем.
— Ант тăватпăр, йăлт пухатпăр! -
Тенĕ пирĕн элчĕсем.

Савăнса патша сăй тунă
Атăлçи çыннисене.
Нихăш ĕçкĕ те ай унăн
Çитеймен тет хальхине.

Патшапа туçи чăвашĕ
Ларнă пĕр кĕрекере.
Ахăр, пулнă юрă-ташă —
Унсăр иртмĕ ĕçкĕре.

Вăл ĕçке тĕнче ăмсанĕ:
Пынă пĕтĕм чăваша
Ут, укçа, тумтир те сăнă
Парнеленĕ тет патша.

Хай парне хутне те панă,
Ун пичечĕ — ылтăнран.
Çав хутпа эпир упраннă
Хамăр чун çухаласран.

III

Хурахла вĕлересрен те
Саланса пĕтессинчен
Вырăс хӳтлĕх пулчĕ ĕнтĕ,
Чун тухмин чул хушшинчен.

Чул хушши çапах вут мар-мĕн:
Чун пулсассăн — пурăнан,
Вăл, вут пек, йăлтах çунтармĕ,
Тымарна ярса хунан.

Пусмăр пĕлĕтне сиресшĕн
Тус-йышпа пĕрле, чăваш,
Алла-ал нумай кĕрешрĕн,
Тупрăн чĕрлĕхлĕ малаш.

*1976*

## ӲКӖТЛЕВҪӖ

*(Ермей Рожанский)*

Тупӑнчӗ тинех чӑвашӑн
Ӗлӗк ҫӗтнӗ кӗнеки.
Халӑха та тӗп тӑвасшӑн
Пулнӑ пуль кун-ҫул йӗрки.

Ахаль мар-тӑр ун сӑнарӗ —
Уяса тӑман ӗне.
Тем хыпма та вӑл пултарчӗ,
Ҫӑтнӑскер кӗнекене.

Тав Турра, вӑл пехиллерӗ
Раҫҫейпе тӑванлашма.
Пӗтесрен вӑл хӳтӗлерӗ,
Пачӗ кун чӑваш пулма.

Вӑл пире ҫӑлса хӑварчӗ
Тутара тухас ҫӗртен.
Кӗнеке алла тыттарчӗ,
Малалли килет пиртен.

Хамӑр халӑх ним те мар та,
Ҫук-ҫке пурнӑҫ кӗнеки.
Хал илсен пухса кӑтартӗ
Хӑй ӑсне тӗрки-тӗрки.

Ытлашши ҫӗклем шутланмӗ
Вырӑсран та вӗренни.

Тĕттĕмре тек муталанмăн —
Капланса килет çĕнни.

Ячĕсем пулин ик тĕрлĕ,
Пирĕн Туррăмăр пĕрре.
Вĕрентеççĕ пĕр манерлĕ —
Иккĕш те ырра, тӳрре.

Ан вĕлер çынна, ан иртĕх,
Ан вăрла, чунна ан сут.
Тăрăш, тăрмаш каç та, ир те,
Ĕçлесе кăна эс пуй.

«Катехизис» кĕнекеçĕм —
Чунăм тарĕ, чун пахи.
Хăй пулсан та пĕчĕкçеççĕ,
Вăл — кун-çул йĕркин пуххи.

Тав Турра, мана вăй пачĕ
Вĕçлемешкĕн ĕçĕме.
Иксĕлет кун-çул хăвачĕ,
Куртăм хам çимĕçĕме.

Ай-ха-ях çитĕнтермешкĕн
Тертлĕ пулчĕ те иккен.
Вĕçлесе ай çитермешкĕн
Туррăм пулăшрĕ-и тен.

Пĕчĕк чух эп шутламанччĕ
Çак ĕçе кӳлĕнессе.

Чи малтан аттем таланчĕ
Туртрĕ çакă тинĕсе.

Сăрă шывĕ, савнă Кăрмăш,
Манăçми майра аннем,
Пурнăçра пулмарăн хăрмăш,
Ырăпа аса илем.

Чиркӳре аттем тăратчĕ,
Вĕренетчĕ-ха пичче.
Çав мана хавхалантарчĕ,
Уçрĕ маншăн çĕн тĕнче.

Пĕчĕкçĕ чухнех вĕрентĕм
Вуламашкăн та çырма.
Ачаллах вара илентĕм
Христиан пек пурăнма.

Тав сана, аттем чĕлхиçĕм!
Уйăрмарăн халăхран.
Ун хакне епле-ха виçĕн? —
Уççăн палăрĕ кайран.

Çыраканĕ те тăлмачă
Çитмĕл çиччĕ çитĕнсен
Курăнĕ ман ĕç хăвачĕ,
Пурăнаймăп хам унччен.

Халĕ те аран çӳретĕп
Таянса туя çине.

№ К-2909

Кĕмеллеччĕ-ха çĕре те,
Тур вăй пачĕ мĕскĕне.

Хамăн пурнăçăмăн терчĕ
Хуçрĕ, аврĕ тĕрлĕ май.
Тав, хальхи куна çитерчĕ,
Пурнасси юлман нумай.

Халăх ыйтрĕ, тархасларĕ
Хăй чунне хӳтĕлеме.
Çухалмарĕ ĕçĕм тарĕ,
Хĕретмерĕм питĕме.

Чыслăнах тытасчĕ терĕм
Турă пӳрнĕ ыр ята.
Эп ялтан яла çӳрерĕм —
Ӳркенсе тăман ниçта.

Пул-ха терĕç ӳкĕтлевçĕ,
Тĕн çинчен вĕрентекен.
Ӳкĕтлевçĕ те вăл — евчĕ,
Халăхне хӳтĕлекен.

Штанашри чиркӳ Аврамĕ
Иртĕхетчĕ ĕçкĕпе.
Калăн, нимĕнле вăй чармĕ
Кăшкăрать пуп пуçĕпе.

Ик-виçшер эрне тытатчĕ
Чиркӳре вилесене.

Хăратса кăна тăратчĕ
Прихутри крешĕнсене.

Тĕрĕслерĕм — евитлерĕм,
Çитрĕ уншăн та чару.
Чиркӳре вара чиперрĕн
Улшăнчĕ лару-тăру.

Вĕрентсе çӳренĕ майăн
Куртăм тĕрлĕрен пупа.
Хăмсаратчĕçĕ нумайăн
Хăратса тавăрупа.

Чиркӳри уявăн кунĕ
Эп яла пырса çитсен
Кĕлĕре пĕр крешĕн чунĕ
Çукчĕ Урмайра вĕсен.

Чĕнтерме хире ярсан та:
«Çук, пымастпăр!» — терĕçĕ,
Темĕн пек тархасласан та
Пăрахмарĕçĕ ĕçе.

«Килĕшмерĕ вырăс тĕнĕ,
Çӳрес çук чиркĕвĕре.
Эпир ирĕксĕррĕн кĕнĕ,
Тăчĕç хăратса пире.

Хăвăрах калатăр халĕ
Ĕненсе тĕне кĕме.

Шутласассăн каллĕ-маллĕ
Хал çитмерĕ ĕненме.

Ĕлĕкрен килен йăламăр
Çывăхрах чунăмăра.
Ют пулаймăпăр çав хамăр
Хамăрăн юнăмăра.

Тен, çапах та халăх
Кайĕ, пулĕ вырăс май.
Лайăхрах шухăшламалăх
Халь пире парсамăр май...»

Эпĕ, мĕскĕн ӳкĕтлевçĕ,
Икĕ вуттăн хушшинче.
Чиркӳре те пур хистевçĕ,
Чиркӳ шучĕ те — тĕнче!

«Пурăнас пулать-çке пирĕн»
Теççĕ пуп таврашĕсем.
Еплерех-ха хирĕн-сирĕн?
Пăлханаççĕ крешĕнсем.

Сăмахпа пулсан та ырă,
Пуçлăх та хистет çӳлте.
Киреметсене тĕп турĕ
Крешĕнсем пурнан çĕрте.

Эпĕ хам та, урăххи те
Сас-хура çитернĕрен

Пăркăчла пуçларĕç хытă
Чиркĕве çӳременрен.

Ырă кăмăлпа тăвасшăн
Пулнă ĕçĕм çаплалла
Çаврăнчĕ тăван чăвашшăн
Инкекле те хăрушла.

Хăратса çапах та эпĕ
Хистемен тĕне кĕме.
Тĕне кĕртнĕ çын хисепĕ
Ман çитмест-тĕр çирĕме.

Чăвашсем çеç мар, тутар та
Пурччĕ манăн çав шутра.
Вĕсене тупа тутартăм
Кăмăл пуррине кура.

Турă куртăр, пиллĕх кӳтĕр
Упраса вĕсен чунне.
Çавăн пек кăна чиркӳ те
Йыхăртăр ыттисене.

Чăвашла пĕлместчĕ пупĕ
Е ытти чиркӳ çынни.
Пуплеме тăрсан — ăш хыпĕ,
Кирлĕччĕ тăлмач тени.

Хай ăса кĕре пуçларĕç —
Кирлĕ терĕç кĕнеке.

Тĕп ĕçпе пĕрле пĕр харăс
Çыртăм хам — тухин тинке.

Халиччен пачах пулман та
Чăвашла вĕренмелли,
Кунĕн-çĕрĕн асаплантăм,
Çитейместчĕ саспалли.

Хам, юрать, телейлĕ пултăм:
Семинари курсĕнче
Çын ĕретлĕн ултă çул та
Вĕренсе эп курнăччĕ.

Хай илемлĕ калаçмашкăн
Вĕренни ун чух мана
Пулăшрĕ çавна çырмашкăн,
Хапăлларĕçĕ ăна.

«Ă» та, «ĕ» те, «ç» та, «ӳ» те
Çуккă вырăс азбукин.
Пурпĕрех вăл пулчĕ хӳтĕ,
Пур пайти латин чĕлхин.

Ахаль мар-тăр кӳршĕсем те
Тĕслĕх илчĕçĕ манран.
Чаплă мар, тен, пур енчен те
Çыртăм эп май пур таран.

Ломоносов хатĕрленĕ
Кĕнеке ĕренкипе

Хама май эп çыртăм çĕнĕ
Чăвашсен япалине.

Сăмахсем хăш чух çитмерĕç,
Тупрăм хам шухăшласа.
«Ăнланма хĕнрех çав», — терĕç
Теприсем канашласа.

Маттурах çав пĕлейместĕм
Эпĕ хам та чăвашла.
Çĕнĕрен халь çитĕнес тĕк
Тăтăш çӳрĕттĕм яла.

Ытларах вара эп итлĕп
Асаттеçĕм халапне,
Кӳрĕччĕ вăл ытлăн-çитлĕн
Хăй чĕлхин пуянлăхне.

Асаттеçĕм пулчĕ маншăн
Вениамин епископ та.
Çумĕнчен пăрса яманшăн
Тавтапуçах, тупата!

Кĕлеткемĕр пайĕ терĕ
Чысласа вăл чăваша.
Кĕнекешĕн вăл тимлерĕ
Шухăша илсе ăша.

Украинăн паттăрĕ
Терт килсен те ĕçĕнче

Анăç çутипе çутатрĕ
Чулхула тăрăхĕнче.

Пултăм чĕлхеçĕ, тăлмачă
Эпĕ вăл çул уçнипе.
Вырăса вăлах май пачĕ
Паллашма чĕлхемĕрпе.

Ырлаканĕ, хурлаканĕ
Тупăнĕ ман ĕçĕме.
Йăнăшĕ çул уçаканĕ,
Тек тытмарăм çĕклеме.

Ман телейĕмшĕн Дамаскин
Малтанхи ăсчах пекех.
Чăваша та çутатмашкăн
Тăрăшрĕ вăл тек-текех.

Те майра патша хисепсĕр
Хăваланăран хăйне
Пурăнмарĕ вăл нисепсĕр
Хĕстерсе вак йăхсене.

Сăмахсен пуххи эп турăм.
Тĕлленмен, тĕлĕнмелле:
Сăмахсен хисепĕ пурĕ
Вунă пинрен иртмелле.

Тен, унран та ытларах-и —
Эп çитмен Сĕве енне.

Каламалăх çук сăмахĕ
Тетчĕçĕ чăвашсенне.

Курăр, тытăр, вулăр халĕ:
Пирĕн халăх пĕчĕк мар,
Вичкĕнрех сăмах та калĕ,
Ун пĕтмен-ха пархатар.

Хăнăхман ĕçе пултарчĕç
Кĕркури те ик Иван.
Сахал мар сăмах пуçтарчĕç -
Ĕçĕ тухрĕ пек аван.

Чăвашла та вĕренмешкĕн
Иккĕш çырчĕç кĕнеке.
Пупсене пĕлӳ илмешкĕн
Майлашса пырать йĕрке.

Урăхла çырса майларĕç,
Ăстарах иккен манран.
Вунă çул ăна ямарĕç
Семинарире алран.

Хамăр сасă Хусанта та
Илтĕнет хастарлăрах.
Хулана патша пырсан та
Сăв калана хамăрлах.

Вулама сăвви çăп-çăмăл,
Пултараççĕ-мĕн, маттур.

Халь епле ҫěкленмě кăмăл!
Ěҫ татах ăнаслăх пур!

Эпě тек ҫыраймăп ěнтě,
Мěн туни те сахал мар.
Хам курма ěлкěрмесен те
Ěҫěм ярě ҫěн тымар.

Ытларах эп тăваймарăм,
Хал юлмарě-ҫке пачах.
Питě ир куҫ хупрě арăм,
Сахал мар ача-пăча.

Выҫă-тутăллă кун-ҫулăм
Хăртрě ěнтě сывлăха.
Тин маттур ăҫтан-ха пулăн?
Тур каҫартăр ҫылăха.

Ӳлěм ҫитěнес лам-ӳсěм,
Шанчăк пирěн — сирěнте.
Пысăк ăс, хастарлăх, тӳсěм
Пултăр сирěн ěҫěрте.

Ҫуталса ҫěклентěр халăх,
Ěмěр вăл упрантăрччě.
Ыттипе пěр тан пулмалăх
Вырăн патăрччě тěнче.

*1991*

## ТАРИНККА

«Таринккаҫăм, Таринккаҫăм,
Куҫ илемĕ, чун уҫҫи!
Пултăн эсĕ ирĕн-каҫăн
Вутлă кăмăлăм хуҫи.

Аслă ырлăх евĕр туйрăм
Хамăрăн юратăва.
Пурнăҫ ҫулĕ пулчĕ уйрăм,
Ҫавраймарăмăр йăва.

Сывлăх пĕтрĕ. Ăсăм-пуҫăм
Сӳнĕ ҫывăх самантра.
Пурпĕр эсĕ, варлă тусăм,
Ялтăратăн асăмра.

Натали йыхравлăп терĕ
Таврăнмашкăн санпала.
Темшĕн, темшĕн ҫитеймерĕ
Аякран тăван яла».

— Ах, анне, тухса пăхсамччĕ,
Ҫын килмест-и ту енчен?
— Ҫитетех пуль, тăхтасамччĕ,
Курăнмасть-ха килекен...

Тапхăр-тапхăр вĕриленчĕ.
Шанкă пек типет Кĕҫтук.
Ал-ури ун лĕнчĕр-ленчĕр,
Пуҫ йăтма тĕрекĕ ҫук.

Тӗлӗнтермӗш тӗрлӗ тӗлӗк
Ылмашать асилӳре,
Ҫутатать тулта хӗвелӗ
Ҫут ҫанталӑк йӑлипе.

«Таринкkaҫӑм, эс те ҫуттӑн
Юлтӑн манӑн асӑма.
Чи паха парне пек пултӑн,
Уншӑн тав кун-ҫулӑма.

Эп хама та савӑнмалӑх
Парнелесшӗнччӗ сана.
Халӗ юлчӗ асӑнмалӑх,
Тухаймарӗ вӑл чӑна.

Эс пултарӑн каҫармашкӑн,
Тӗл пулма та пултарах.
Юлашки хутчен курмашкӑн
Ҫитейсемччӗ васкарах».

— Ах, анне, тухса пӑхсамччӗ,
Курӑнмасть-и Натали?
— Килетех пуль, тӑхтасамччӗ,
Ним те ҫуккӑ-ха палли.

«Евӗк Натали аппаҫӑм —
Ман телейӗн хӳтлӗхӗ.
Уҫҫӑнрах унпа калаҫӑн,
Ирӗклетӗн читлӗхе.

Читлĕхре иртет-çке кунăм,
Тек чĕртеймĕп сывлăха.
Натали килсессĕн чунăм
Лăш пулать самантлăха.

Наталиçĕм, евĕк евчĕ
Пултăн манăн тĕлĕшрен.
Курайманăн, хӳтĕлевçĕ,
Ним усси те çав ĕçрен.

Тăрăшса пайтах çӳрерĕн,
Килĕшмерĕç ваттисем.
Килĕшнĕ пулсан чиперрĕн
Çитмĕччĕç вилес кунсем.

Пĕтĕм пурнăç, ĕçĕм-пуçăм
Урăхла йĕрленĕччĕç,
Курмĕччĕ çакна та куçăм
Яшлăхăм вĕркевĕнче».

— Вĕренмен хĕрпе мĕн тăвăн?
Хут ĕçне юратмĕ те,
Ĕç-пуçу та ăнмĕ хăвăн, —
Терĕ, хăтăрчĕ атте.

— Чĕмпĕрте вĕрентĕп, — терĕм
Пулĕ вăл вĕрентекен.
— Вăхăт иртнĕ ĕнтĕ хĕрĕн, —
Терĕ çеç вара кĕскен.

— Çук ун пурлăхĕ пăхмалăх,
Кĕрĕ вăл чăматанне...
Кĕтĕ шав сире ют алăк,
Тытăр ютăн хăлăпне... —

Ак мĕн евĕр евитленĕ
Амăшĕ те Таринккан.
Хальлĕхе вăл пултăр тенĕ
Кил тавраш пуçтаракан.

«Пурччĕ манăн хĕр тата та —
Чĕмпĕрте пĕр чиперкке.
Пĕр майра — Олимпиада,
Хам çине пăхан пике.

Туйăнатчĕ пулăшасшăн
Улăхма Олимп çине:
Майĕ пурччĕ унăн ашшĕн
Кăларма мĕн çырнине.

Чăвашла пĕлмен этемшĕн
Пулĕ ман тĕнче сивлек.
Хамăр çын çапах та темшĕн
Çумра чух чуна тӳлек.

Пурччĕ, пурччĕ урăххи те,
Вăл юратрĕ теприне,
Вăл унпа туслашрĕ питĕ,
Уншăн пулчĕ чăн парне.

Пулаймаран эсĕ — маншăн,
Эпĕ хам та сан валли.
Çакăн пек телей пулманшăн
Сăвă çеç ман памалли.

Вăрттăн-вăрттăн шăрçаларăм
Эпĕ сăвă сан çинчен.
Саншăн юлĕ пĕр çак ярăм,
Çав альбом çеç ман енчен.

Асăмра тăраççĕ чĕррĕн
Сирĕн ял вырăнĕсем —
Санпала çӳренĕ çĕрĕн
Улăхĕ-çаранĕсем.

Эс унта çуралнăран-ши
Хитререх унти кĕтес?
Е вăл вырăн чаплăран-ши
Хӳхĕмрех çиçетĕн эс?

Ĕшнере «Нарспи» вуларăм
Çамрăксем йăлăннипе.
Хушăран йăл-йăл кулайрăн
Кăмăлу çĕкленнипе.

Çирĕп кăмăл палăратчĕ
Шухăшлă куçусенче,
Аллунти сирень турачĕ
Тем чĕтретчĕ йыш çинче.

Нарспилле хастарлă туйăм
Сан виçеллĕ пуплевре.
Сан ĕçчен ална та туйăн
Çыпăçуллă пӳ-сире.

Курăнса тăрать асамлăн
Авалхи кĕпе тĕрри.
Сăнассу килет саламлăн,
Хускалать çынсен чĕри.

Эс килте те, хăнара та
Юмахри пек чиперкке.
Ялăмра та, хулара та
Пултăн илĕртмĕш пике.

Туй тума тесе чĕнсеттĕм
Чĕмпĕрти тусăмсене.
Сăнаса пăхма сĕнеттĕм:
Килĕшсеттĕн вĕсене.

Пелепей таран мухтарĕç,
Таринккаçăм, сан сăнна.
Темиçе те тархасларĕç
Çураçас тесе сана.

Эсĕ пур — хальччен те хирĕç
Никампа та килĕшмен.
Шухăшна çапах та сир эс,
Ĕмĕрлеймĕн пĕр-пĕччен.

Пĕр-пĕччен е иккĕн пулăн,
Ан çухат нарспилĕхе:
Ут патваррăн та хăюллăн!
Çак сăмахăм — пиллĕхе».

— Эй, анне! Çаплах килмерĕç,
Пурччĕ ман калаçмалли...
— Çук-ха, çук çав, çитеймерĕç
Килетех-ха Натали.

Сăвăça вĕрилентерчĕ,
Ӳслĕкĕ чыхăнтарать.
Пĕр самант лăпланчĕ терчĕ.
Кăшт канать вăл, çывăрать.

Ту çине ăна хăпартрĕç,
Вăл калать пек шăхличе.
Кайăксем юрра шăратрĕç, —
Тĕлĕнсе итлет тĕнче.

Вăрансан тӳрех каларĕ
Тĕлĕкне хăй амăшне.
— Ырă ят илтетĕн мар-и?
Сарăлĕ вăл инçене.

«Мĕн чысра илтейĕп ĕнтĕ?
Тунă ĕçĕм йышлă мар.
Вĕçленмен ĕçсем пулин те
Тĕсĕ-пуçĕ чыслă мар.

№ К-2909

Тĕрлĕ пурлăх хăварасшăн,
Чăн, тăрмашрăм сахал мар.
«Нарспипе» юмах таврашăм,
«Çĕн Сăмах», «Псалтирь», букварь.

Темĕн чул редакциленĕ,
Ӳкерӳ, фото ĕçсем...
Тен, ытти те хисепленĕ,
Чылаях иккен вĕсем.

Ĕмĕтре кунтан ытлаччĕ,
Тек тӳр килмĕ вĕçлеме.
Иван Якăлч ăнтăлатчĕ
Библие пичетлеме.

Пушкина та куçарасшăн
Кăмăл вĕçĕм хĕтĕртет.
Павлов опера çырасшăн:
Çыр часрах либретто тет.

Пулаймарăм ӳкерӳçĕ,
Чи сăваплă — çав ӳнер.
Ах, Эрехĕрри çăлкуçĕ,
Ту çинче тапаканскер!

Пурччĕ манăн ӳкерессĕм
Иксĕре Таринккапа.
Ах, савниçĕм, ах, чĕкеçĕм,
Ма килмерĕн аппапа?..

Савнӑ тусӑм ялӗн ячӗ
«Хӗр йӗрри» пек илтӗнет.
Чирӗм саншӑн хуйхӑ ячӗ,
Сан куҫу куҫҫульленет.

Ту ҫӑлкуҫӗн пӑрлӑ шывӗ
Ҫав куҫҫуль пек ҫуталать.
Кӑмӑлу сан пулмӗ сивӗ,
Эпӗ кайӑп, шыв юлать...

Ма телей пулмарӗ пирӗн?
Ма пӗтетӗп ҫамрӑкла?
Ҫакӑ шухӑш каҫӑн-ирӗн
Пусмӑрлать мана ытла.

Шав ҫынра куратпӑр айӑп,
Пысӑк айӑп — хамӑрта.
Ах, ӑҫтан-ха пытарайӑп —
Ашкӑнсаттӑм масарта.

Ҫынпала тӳрккес тавлашрӑм,
Чыс тумарӑм чиркӗве.
Ӗҫкӗпе чылай айкашрӑм,
Уяман ӑшша-сивве.

Каҫару ыйтсан каҫаймӗ,
Тӳрленеймӗ халӗ тин.
Сӑв калаймӗ, калаҫаймӗ
Хӑрнӑ-типнӗ Кӗҫтенттин.

Ху пуçна хăвах шăтарăн
Терĕ юмăç та хама.
Вилĕмрен ăçта-ха тарăн?
Ӳпкелеймĕн никама.

Халь Турра та ӳпкелеймĕн,
Култăм хам ăраскалран.
Пулманах та мар телейĕм,
Хам вĕçертрĕм алăран.

Йăнăш пулчĕ-ши темешкĕн
Сахал мар çав ман сăлтав...
Шанчăк сӳнчĕ чĕрĕлмешкĕн,
Мĕн пӳрнишĕн — пысăк тав!

Тăлăха тăрса юлаççĕ
Вĕçленсе çитмен ĕçсем.
Ĕнтĕ манăç та пулаççĕ
Çырăнман сăмахăмсем.

Питĕ шел хĕрсе куçланă
Ӳкерес сăнарсене,
Питĕ шел юса пуçланă
«Кив Сăмах» алçырăвне.

Ма килмерĕн, Тар[illegible]касăм?
Е çул тытрăн аякка?
Кĕтрĕм-кĕтрĕм ирĕн-каçăн,
Хурлантартăн Кĕçтука.

Хатĕрччĕ тухса тармашкăн
Эс килтен мăнастире.
Хăвшăн çеç хыпса лармашкăн
Ан шутла эс инçетре.

Аннŭне ăçтан пăрахăн?
Тупăн шелсĕр ŭкĕнŭ.
Пурăнсассăн та хăраххăн
Пултăрччĕ çумра аннŭ...»

---

Масартан саланчĕ халăх.
Çĕнĕ вилтăпри патне
Юлнă ик хĕрарăм. Кăлăх
Асăнаç поэт ятне.

— Çитеймерĕм — пиллеймерĕн.
Каçарсам çапах, Кĕçтук.
Пултăн эс пĕртен-пĕрскерĕм,
Сан пекки тупас та çук...

— Таринкка, каяр. Шăнатăн, —
Терĕ лăпкăн Натали.
Хĕр хŭхлет, чĕтрет чăнах та,
Шав куçне шăлать алли.

*2000*

## ХУРАВСĂР ÇЫРУСЕМ

«Ĕмĕрне те манмăп теттĕн
Савнă Нуççуна.
Остерта иккен ĕçлетĕн,
Çывăхра — Десна.

Атăл мар, Украйна шывĕ
Саншăн ăшăрах.
Сансăр пурăнăçăм сивĕ,
Сăнару — асрах.

Кайрăн, çĕтрĕн — сас памарăн
Кĕтрĕм темĕнччен.
Паня хыпарне вуларăм —
Эс унта иккен.

Пурнăçу сан пурнăç мар-мĕн,
Татăлас пекех.
Имĕш, вăл тек çулçă сармĕ,
Çитĕнмĕ текех.

Ман пирки-çке çын кун-çулĕ
Кĕскелет, пĕтет.
Хытă кӳрентертĕм пулĕ,
Халĕ чун кӳтет.

Çăмăл мар-ха пурнăç терчĕ,
Йывăр манăн та.
Вăл чуна пуссах çитерчĕ
Чĕмпĕрте, кунта...

Çӑмӑл марччӗ, савӑк марччӗ
Упӑшкам пур чух.
Чир ӑна çапса антарчӗ, —
Ӗнтӗ халь вӑл çук.

Венчетле пӗрлешнӗ хыççӑн
Хытӑччӗ алли:
Эп тем чул патак та çинӗ,
Пулнӑ ун кулли.

Сансӑр килӗм те пуш-пушӑ,
Вӗçӗм тунсӑхлать.
Кулянатӑп сан шӑпушӑн
Пуринчен ытла.

Кӑмӑлна килет пулсассӑн
Кил — пӗрле пурнар.
Вилӗме текех ан асӑн,
Вырӑн хӗсӗк мар.

Е манса та кайрӑн ӗнтӗ
Эсӗ иртнине?
Таврӑнас килмест пулин те
Яр хурав хутне.

Темиçе çыру çырсан та
Çук санран хурав.
Çывӑра пӗлми кулянтӑм —
Питӗ аптӑрав.

Тен, такам сана памарĕ
Ман çырусене?
Е халь эсĕ çук та мар-и
Тетĕп хăш чухне...»

Ахаль мар пĕр кун вăл курчĕ
Тĕлĕкре çĕн пÿрт.
Сăрт çинче ларатчĕ пÿрчĕ —
Вĕр çĕнехчĕ çурт.

Чарăнать çырмашкăн Нуçça,
Путрĕ шухăша:
«Пĕтĕмпех калаймăн уççăн —
Пулĕ тамаша.

Кун пекех пулсассăн ÿлĕм
Юлăп пĕр-пĕччен.
Ар чунне кураймĕ пÿлĕм
Эпĕ виличчен.

Йышăнасшăн мар-çке чунăм
Хурлăх тенине.
Тен, пĕтмен-ха Миша кунĕ,
Манмĕ Нуççине.

Вилĕме пĕлтернĕ тĕлĕк
Килĕ тĕрĕсе.
Вăл ан пултăр Миша тĕллĕн -
Кайтăр сирĕлсе.

Ман пирки ик çын пĕтерчĕç
Хăйсене хăйсем.
Халĕ виççĕмĕшĕн терчĕ
Çапларах-ши тем?

Ытларах хĕн-хур курмашкăн
Пӳрнĕ пулмалла.
Хамшăнах-ши? Камшăн, камшăн
Манăн чăтмалла?

Шутламашкăн та хăрушă,
Илем мар аса.
Вăл ан пултăрччĕ çак хушă,
Тăтăр тăхтаса...»

Тĕксĕм тум тумланнă Нуçça
Сулланса ларать,
Майĕпен лăпланнă хыççăн
Малалла çырать:

«Эсĕ шăллăм пек юлсассăн,
Эп аппу пулсан
Пит сывламăттăмччĕ ассăн,
Хӳтлĕх пулĕ сан.

Миша, Миша! Ах, Минюкăм,
Вут-кăвар чĕре!
Сансăрăн пуçне ман çуккă
Тусăм тĕнчере.

Теччĕрех эп кăмăллаттăм
Чĕререн-чунтан.
Чун уççи те ыр хăлатăн
Пултăн пин çынтан.

Пытармашкăн çăмăл марччĕ
Çакă пулăма.
Упăшка пурри-çке чарчĕ
Ирĕклĕ пулма.

Шухă çӳресессĕн эпĕ —
Хурлăттăн хăвах.
Пулмĕччĕ ман çын хисепĕ,
Кулĕччĕç шавах.

Куç умне килсе тăраççĕ
Теччĕ сăнĕсем.
Сан ятна асăнтараççĕ
Манăçми кунсем.

Ăмăрткайăк пек çӳреттĕн
Çăмăллăн утса.
Çынсене чĕр хал кӳреттĕн
Эсĕ тухатса.

Танлăх, ирĕклĕх, тăванлăх —
Çакчĕ сан кĕввӳ.
Пулчĕ çирĕп те яланлăх
Çакă тĕллевӳ.

Пĕртăван пек пурăнаттăн
Паньăпа пĕрле.
Кĕнекешĕн ăвăнаттăн
Кăнтăрла, çĕрле.

Калаçаттăнччĕ суймасăр,
Илнĕччĕ ыр ят.
Çакăн пек çынна савмасăр
Кам-ха тăраять?

Эс ўкертĕн темиçе те
Манăн сăнăма.
Вĕсене шавах çĕтеттĕн:
Çукчĕ упрама.

Маншăн пĕтĕмпех аванччĕ,
Шав тиркеттĕн ху.
Эсĕ Чĕмпĕрте пулсанччĕ —
Пур ăсталăху.

Сассуна килет итлессĕм,
Курăттăм хăвна.
Ах, хăçан-ши çитĕн эсĕ
Савнă хулуна?

Эс çырмашкăн та ăста-çке,
Сан чĕлхў хитре.
Чĕмпĕртех ăна туптаççĕ,
Хăвăр чĕлхĕре.

Чиперех курнатăн теççĕ
Хальлĕхе туссем.
Çулăмсем чăнах иртеççĕ —
Çавăншăн кичем.

Нихăçан та сивĕнессĕн
Туйăнмастăн эс.
Ах, хăçан-ши килĕн эсĕ?
Мĕн тата сĕнес?

Е хамах тухса пырам-и?
Ху çырса пĕлтер.
Е пырса курма юрамĕ?
Хыпарне çитер...»

Вăл кайран çапах та илчĕ
Аякран çыру.
Савнăç мар вăл илсе килчĕ —
Макăру-йĕрў.

Савнă çын алли çырман-мĕн
Кĕтнĕ çырăва.
Ĕмĕрне те Нуся манмĕ
Хурлă хурава.

Хурлăх тутăрĕ вăл витрĕ
Чиперкке çине.
Пĕр-пĕччен ун пурнăç иртрĕ
Асăнса тусне.

Ӳкӗнсе хӑйне ятларӗ
Çеçпӗл вилнӗрен:
«Маншӑн, маншӑн пӗтрӗ мар-и?»
Терӗ вӗçӗмрен.

*1999*



# ТУПМАЛЛИ

## СĂВĂСЕМ

### «Мăн асаттесем» ярăмран


Тухья . . . . . 3
Улăпсем . . . . . 5
Мерчен хули . . . . . 7
Кăтраха . . . . . 8
Ĕшел хули . . . . . 10
Пăлхар патши . . . . . 12
Пăлаху . . . . . 15
Урасмет . . . . . 17
Сăваш . . . . . 18
Сарри паттăр . . . . . 20
Кĕмĕл алтăр . . . . . 24


### «Йăла-йĕрке еккипе» ярăмран


Уй хапхи умĕнче . . . . . 26
Курак тăманĕ . . . . . 27
Хĕрт-сурт. . . . . . 28
Пилеш тататăп . . . . . 29
Вутăшпи . . . . . 31
Ват ăшши . . . . . —
Инкек. . . . . . 32


### «Турă умĕнче» ярăмран


Тĕнчене тытса тăратăн . . . . . 34
Сăваплă хÿтлĕх . . . . . 35
Яваплăх . . . . . —
Çÿлти Хуçа . . . . . 36
Кăтартса пырсамччĕ . . . . . —
Çылăх мана . . . . . 37

Ырăпа усал . . . . . . . . . . . . . . . . 38
Тӳре . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 39
Ăс парсамччĕ ачама . . . . . . . . . . . . 40
Тав сăмахĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 41
«Турă, Эсĕ çук пулсассăн...» . . . . . . . . . 42
Кĕлĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . —
«Мăшăрăм, пурнăç тĕрекĕ...» . . . . . . . . 43
«Мĕскер вăл сăваплăх?..» . . . . . . . . . 44
«Усала ан асăн...» . . . . . . . . . . . . . —
«Каçару ыйтмашкăн...» . . . . . . . . . . . 45
«Турă вырăнне ан хапсăн...» . . . . . . . . . —
Хĕвĕшӳ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 46

## ПОЭМĂСЕМ

Юрă — халăх кун-çулĕ . . . . . . . . . . 48
Çăлăнăç . . . . . . . . . . . . . . . . . 54
Ӳкĕтлевçĕ . . . . . . . . . . . . . . . . 63
Таринкка . . . . . . . . . . . . . . . . . 75
Хуравсăр çырусем . . . . . . . . . . . . . 86

Литературно-художественное издание

*Для старшего и среднего школьного возраста*

**Геннадий Федорович Юмарт
(Трофимов)**

**АВАЛХИ ХАВАЛ
ДРЕВНИЙ ДУХ**

Стихи и поэмы

На чувашском языке

Художник *С. А. Бритвина*
Художественный редактор *Г. А. Игнатьев*
Технический редактор *Л. Н. Кондрашкина*
Корректор *Н. П. Печникова*
Компьютерный набор *Р. Н. Садырга*
Компьютерная верстка *Л. А. Гавриловой*

ОКДП 2211202

Изд.лиц. № 010047 от 24.12.96. Сдано в набор 12.09.01.
Подписано к печати 15.11.01. Формат 70х90 1/32. Бумага офсетная.
Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ.л. 3,51. Учетно-изд.л. 3,23.
Тираж 1000 экз. Заказ № К-2909. Изд. № 28.

РГУП «Чувашское книжное издательство»,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Отпечатано в типографии РГУП «ИПК «Чувашия».
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.



**Геннадий Трофимов-Юмарт** 1938 çулта Чăваш Республикин Красноармейски районĕнчи Кайри Карăкра çуралнă. Шупашкарта security pedinstitut пĕтерсен Самар тăрăхĕнче учительте, Чăваш кĕнеке издательствинче редакторта ĕçленĕ. 1970 — 2000 çулсенче вăл Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче вăй хунă. Унăн тăхăр сăвă кĕнеки тухнă. Уйрăм сăввисене тĕрлĕ халăх чĕлхипе пичетленĕ, хăй те ытти халăх поэзине чăвашла чылай куçарнă. Сăвăç халăх сăмахлăхĕпе литературин еткерне пухса хатĕрлес тата редакцилес ĕçре нумай тăрăшнă. Вăл фольклор, поэзи, илемлĕ куçарупа литература çыхăнăвĕсем çинчен чылай статья çырнă. Г. Юмарт — Чăваш патшалăх премийĕн лауреачĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ